31-358 3827

Ç. ЙАЛАВИН

Хакĕ 45 пус

# Кам
# Кама

Тăватă пайлă пйессă

1931

Ҫăвашсен патшалăх истаттĕлстви
Шупашкар

3827

Ç. ЙАЛАВИН

# Кам кама

Ретактăр МИТРОФАНĂВ

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
... Чувашской АССР

ÇĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИСТАТТЕЛСТВИ
ШУПАШКАР 1931

# ВЫЉАКАНСЕМ

**Пĕрремĕш пайĕнђе:** арçынсем 5, хĕрарăмсем 4.

1. РОМАН ÇИТĂРĂВ—йалти кулак, 48 çулта.
2. ВАССА—унăн арăмĕ, 45 çулта.
3. ЙЕВКЕН—унăн ватă хĕрĕ, 26 çулта.
4. ТИХХĂН—унăн ывăлĕ. Сывмар, ухмахрахскер. Çынпа калаçнă ђухне пĕрмай ĕхĕлтетсе кулат̆, 22 çулта.
5. КРИШША ПЕТРОВ—ĕлĕк охвитсерте пулнăскер. Вĕçкĕн тумланат̆. Çăмарта пухакан ертелĕн пуçлăхĕ. Мухтанаканскер, 27 çулта.
6. КАРАЂĂМ—Çитăрăв кулак тусĕ. Ђиркӳ старăсти, 50 çулта.
7. КЛАВЙЕ—Илле амăшĕ, ђухăн хресђен арăмĕ, 49 çулта.
8. МАРИНЕ—йевђĕ. Çитăрăв хĕрне—Йевкене çураçма пынă, 42 ç.
9. ТАРАС—йалти ђухăн хресђен. Çитăрăв патĕнђе тарçăра тăнă, 40 çулта.

**Иккĕмĕш пайĕнђе:** арçынсем—6, хĕрарăмсем, пĕрмай выљакансем—2, массăллă стсенăра тата 5—7 хĕрарăм.

1. ИЛЛЕ МАККАРĂВ—Хĕрлĕ çартан таврăннă маттур кађђă. Ĕçђенскер. Колхос орканисатсилекен, 25 çулта.
2. КЛАВЙЕ—унăн амăшĕ (вăл 1-мĕш пайĕнђе те пур).
3. ВЕРУК—Иллен савнийĕ. Тарас хĕрĕ. Активискă, 20 çулта.
4. ПАВĂЛ ВАÇÇИЛЂЂĂ—уђђитлĕ. Активист. Çĕнĕ пурнăçшăн пит тăрăшса ĕçлет. Колхос тума пулăшат̆, 26 çулта.
5. ЉАВА—партти йађейккин çекреттарĕ, колхос тăвакансенђен пĕри, 25 çулта.
6. ЕНТРИ—йалсовет претçетаттĕлĕ, 36 çулта.
7. РАПОЂ ЂИ—Шупашкартан пынă прикатир, 30 ç.
8. КАРАЂĂМ—(вăл пĕрремĕш пайĕнђе те выљат̆).
9. Тата 6—7 хĕрарăм.

**Виççĕмĕш пайĕнђе:** арçынсем—5, хĕрарăмсем—3 (тата массăллă стсенăра çамрăксем пур).

1. ЕЛЕКÇЕЙ—хĕр вăрласа пынă лавçă. Кулаксем майлăскер, 40 çулта.
2. ТРАХВИН—кил хуçи. Пит хытă çын, 46 çулта.
3. МАРХВА—унăн арăмĕ, 42 çулта.
4. ХВЕТКЕ—комсомолккă.

(Ыттисем: Тиххăн, Илле, Йевкен малтанхи стсенăра выљанă). Тата милитсионер пур. Пулса ĕлкĕреймен туйа курма пынă çынсем.

**Тăваттăмĕш пайĕнђе:** массăллă стсенă ђухăнсемпе вăтамсен пухăвĕ. Кусенђен пуçне ыттисем пурте пулаççĕ.

МИХХАЙ—комсомол йађейккин çыруçи.

**Пилĕкĕмĕш пайĕнђе:** Тырă вырнă вăхăт. Кулаксенђен пуçне пурте. Тата урăххисем; пĕр ват çын—Љава арăмĕн ашшĕ. Колхос курма пынă хĕрарăмсем, çамрăксем. Шкул ађисем, пионерсем.

Отпечатано в типографии № 1 Чувашгиза, г. Чебоксары

Уп. Чувашглавлита № 785 Заказ № 2.069. тираж 2.100 экз. 4 1/2 п. л.

## ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ

Çитăрăв кулакăн малти таса, пысăк, икĕ пӳлĕмлĕ пӳрҫĕ. Турăш умне питшăллисем, илемлĕ сурпансем çакса тултарнă. Пӳртне малти йенне шпалер çапнă. Тĕрлĕ карттинсем çыпăçтарса тултарнă. Çтена çумĕнҫе саркайăк решетки. Ҫаршав уçнă вăхăтра алăк патĕнҫе Çитăрăвпа йалти ҫухăн Тарас хытă кăшкăрса тавлашаççĕ. Малта, сĕтел хушшинҫе, Васса, Марине, Йевкен, Кришша Тиххăн пĕр-пĕринпе пăшăлтатса калаçса ҫей ĕçеççĕ. Вассапа Маринен хăйсен сăмах, Кришшапа Йевкенĕн (çамрăксен) хăйсен сăмах. Калаççан-калаççан, Кришшапа Йевкен ахăлтатса кулаççĕ, Кришша вăрттăн сĕтел айĕнҫе ун ури çине пусать. Васса Маринене çу, ҫăкăт тыттарать, çиме сĕнет.

### I.

ТАРАС. Ман шутпа ун ҫухлĕ çеç тухмалла мар! Улталасшăн есĕ мана, Раман Çитăрҫҫă!

ÇИТĂРĂВ. Мĕн ҫухлĕ вара сан шутпа? Шутла есĕ авантарах! Пăх авантарах. Есĕ ман патăмра виçĕ уйăх ытларах ĕçлерĕн. Çаплаи?

ТАРАС. Тăватă уйăха 6 кун çеç çитеймест, Раман Çитăрҫҫă.

ÇИТĂРĂВ. Виçĕ уйăх ытларах! Ан тавлаш манпала.

ТАРАС. Тăватă уйăха йахăн, Раман Çитăрҫҫă, лайăх астăватăп.

ÇИТĂРĂВ (*кăшкăрарах*). Есĕ мана аҫавырăнне хуратăни вара? Мана улталаймăн. Пуçа çавăрса пĕтертĕн çук йапалапа. Тăн тухрĕ санпала, йавăл!

ТАРАС. Такам такама улталасшăн. Тарăхтартăн есĕ мана. Ҫуна илтĕн. Ну йурĕ, виçĕ уйăх çурă пултăр еппин! Есĕ вĕт пире улталама вĕреннĕ!

ÇИТĂРĂВ (*кăшкăрса*). Есĕ ман пата укçа ыйтма килни, йе йури вăрçса харкашма? Епĕ вĕт урăхла та тыткалама пĕлетĕп!

ВАССА (*упăшки йенелле çавăрăнса*). Ђейу сивĕнет, ватти, лар ђей ĕçме. Ӳлĕмрен калаçса татăлăр. Тупрăн хăнасем пур ђухне. (*Хăнисене*). Çийĕр, ĕçĕр, ăна ан пăхăр. Çиме лартнă. Урăх нимĕн те çук—самани çавă. Укçапа та нимĕн тупма çук.

ТАРАС (*кăшкăрать*). Епĕ хам ĕçленĕ укçана илме килнĕ, кивçен ыйтма мар! Епĕ те сан умна ђăркуçланса ларас çук. (*Çитăрăв пĕр ђĕнмесĕр штђутпа турткалать*).

ТИХХĂН (*Кришша Йевкен алмине вăрттăн ђăмăртанине курсан кулса çăварне сыпнă ђейне сĕтел çине пĕрĕхсе йарать*). Хи-хик, хи-хи-хик. Пăхха, анне, йепле вĕсем хи-хи-хик...

ВАССА (*çиллĕн Тиххăна*). Çапса сирпĕтĕп ђашку мĕнĕпе Мĕн манка сурăх пек, сĕлекӳсене йухтарса ларан сĕтел хушшинђе! (*Сĕтел хушшинђен çавăтса карать.*) Тух кунтан, йавăл! Йăтăнса кĕрсе ларнă!

ТИХХĂН. Ихик, ихихик (*сак патне кайса çĕлĕкне илет те çӳлелле ывăтса выђать*).

ВАССА. Ан пăхăр ăна, çийĕр. Çапла вăл пирĕн. (*Упăшкине*). Калаçса татăлтăни ес пайан çак! (*Тиххăна*). Ђарăн ухмахланма.

ÇИТĂРĂВ. Çиђђас. Шутласа кăларамха!

КРИШША. Мана хуш есĕ шутлама, нађђас шутласа парăп. (*Йевкене*). Шăршла, йепле тутлă пирус шăрши. Йалта та епĕ çеç туртап кун пек пирус.

ЙЕВКЕН. Мухтанма йурататăн есĕ, Кришша.

КРИШША. Çу-у-ук, мухтанса мар епĕ. Тĕрĕсне калатăп. Ман пек шалу илекен йалта та урăх никам та çук. Тĕрĕс марим вăл?

ТАРАС. Ну шутласа кăлартăни пайан? Кĕтсе ывăнтăм.

ÇИТĂРĂВ. Укçа илессӳ килсен—кĕтĕн. Акă асту. Виçĕ

уйăхшăн ултшар тенкĕ çурăран 19 тенкĕ те аллă пус пулаť. Çаплаи? Епĕ сана икĕ пăт та вăтăр кĕрепенке ыраш панă. Пăтне 4-шар тенкĕрен вăл пулаť 11 тенкĕ. Тĕрĕс вĕт?

ТАРАС. Ыраша виçшер тенкĕ çинђен килĕшнĕђђĕ вĕт. Мантăним?

ÇИТĂРĂВ. Хăçан пулнă вăл виç тенкĕ? Тĕлĕкре курнăи есĕ ăна? Вăт 19 тенкĕ те аллă пусран 11 тенкĕ кăларас пулаť. 8 тенкĕ те аллă пус пулаť.

ТАРАС. Епĕ сана ку хакпа килĕшмен.

ÇИТĂРĂВ. Итле ес, ђорт! Укçан сана пĕрре 3 тенкĕ, тепре—астăватни: тăвар илме кирлĕ терĕн—тенкĕ те çирĕм пус патăм.

ТАРАС. Пуçна тивтĕр йулашки. Намăссăр, йытă! Шалђу тулĕха!

ÇИТĂРĂВ (*кăшкăрса*). Тух кунтан, çара пакарта. Епĕ пырса йăлăнман сана.

ТАРАС. Ларĕха пырна. Нумай тарăхтартăн (*алăкне хытă хупса тухса кайаť*).

ÇИТĂРĂВ. Хуп çăварна, çара пакарта!

II.

ВАССА (*упăшки патне пырса*). Мĕн калаçса тăран унпала, кутĕнђен тап та сиктер! Çимелли пĕтсен хăйех килĕха. Айта лар. Хăнасене те капла аван мар. Тупрăн калаçма.

ÇИТĂРĂВ. Темĕнпе хăратасшăн тата йурăхсăр (*пÿлĕме кĕрет*).

III.

МАРИНЕ. Йепле тавлашаť, намăссăр. Хăй килĕнђи пек ахăрашаť. Турăран та хăрамасť. Ťфу-у!

ВАССА (*аллине сулса*). Мĕн каламалли пур ĕнтĕ. Тăна илҫĕ. Килет те çапла тавлашма тытăнаť. Те вăл выçă аптăранине епĕр айăплă.

КРИШША. Раман Çитăрҫҫă авантарах тыткалама пĕлмест ăна. Епĕ пулсан калаçтарса тăрататăпи ăна хам çуртра! Купарҫаран ланк тутарап та сирпĕтсе кăларатăп.

МАРИНЕ. Çавă çеç кирлĕ ăна. Çавă çеç. Лайăха пĕлекен çын мар вăл.

ЙЕВКЕН. Пĕркун та, халĕ те кăшт çеç çапăçса кайаҫҫĕç.

ВАССА. Сутпа хăратаççĕ. Самани çаплалла. Тӳри-шари те вĕсен майлă. Караҫăма тарçи ҫут çеç хуптараҫҫĕ вĕт, мăшкăл. Пĕрре çапса йанăшăн хупса лартаҫҫĕç. Штрав тӳлекелесе аран хăтăлҫĕ.

ТИХХĂН. Пĕрре çеç çапман вăл. Пит хытă тытса ислетнĕ вăл ăна. Хам куртăм. Тупата вăттăк.

ВАССА. Ан аташ тенĕ сана! Санран ыйтмаççĕ. Мĕн пĕлен есĕ? Шăп пул! Ан кар çăварна! Миçе каламалла сана!?

ТИХХĂН. Калаçма та йурамасти? Ман ҫĕлхе çуки вара Акă ман ҫĕлхе (*кулкалаť*).

ЙЕВКЕН. Ҫарăн! (*Кришшана ҫей тултарса параť*).

МАРИНЕ. Раман Çитăрҫҫă ма тухмасť тата? Ăçта карĕ?

ВАССА. Çиленнĕ вăхăтра çапла вăл. Пӳлĕме кĕрсе уткаласа çӳрет.

КРИШША. Епĕ пулсан çав Тарас пеккисене хампа тавлаштарса тăмастăп (*кăшкăраť*). Молҫа-а-аť! тетĕп те, шăп пулаççĕ. Салтакла! Вĕсемпе çепĕç клаçсан ĕç тухмасť. Çыни вĕсем? Вăт хулара, унта урăхла опрашҫатсă тума пĕлеççĕ. Нумай пулмасť епĕ Хусанта пу лтăм. Ресторана кĕрсен сан умăнта ташласа çеç тăраççĕ. «Что угодно? Что прикажете?» Хушатăн: «Çавна илсе кил

çавна кӳр». Минутра туса параççĕ. Вăт йĕркене пĕлеççĕ? Ĕлĕк салтакра çапла ђђĕ. Теншђик атă тасатса парат̆. Пурне те тăват̆. Ох, хитре хĕрсем пурçке, чорт возьми. Пĕр кашăк шывпа çăтса йарăн.

ЙЕВКЕН. Есĕ калаçсан вара, Кришша.

КРИШША. Еп çитсенех ђупса пыраççĕ. Унта пур çĕрте те телефон. Алло! Парăр мана çав номĕр. Параççĕ. Вăт вăл пурнăç. Ĕçме тесен ĕçме пур, çиме тесен çиме пур. (*Йевкене*). Пĕрре иксĕмĕр кайăпăр. Хусан кăтартам сире. Пысăк хула. Ăна пăхнă çĕрте Шупашкар мĕн вăл.

ВАССА. Йевкен çӳреймĕ вăл, ăçта-а-а унта!

ЙЕВКЕН. Пĕрре кайса килесђĕ. Пысăк хулана пĕрре те кайман. Çаплах ĕмĕр иртет.

ВАССА. Ан супĕлтет. Çуктăр унта сан пеккисем. Ăна шанха. Вăл тем те калаçĕ. Ђĕлхепе çăват̆ вăл.

КРИШША. Апла епĕ шанђăксăра тухрăмим? Ну, сиртен кăна кĕтменђђĕ. Есĕ мана „оскорпљђат̆“ тăватăн. Кайнăшăн мĕн пулат̆. Ĕмĕр иккĕ килетим? (*Утса çӳрет*). Ĕмĕр иккĕ килмест. Пурнăçа савăнăçлă иртерес пулат̆.

ТИХХĂН. Мана тапак илме укçа парха. Укçа памаççĕ мана. Туртас килет!

ВАССА (*пуçне пăркаласа*). Е-е-е-х! ăс тавраш санăн. Хăнаран укçа ыйтаççĕи? Кам вĕрентрĕ сана? Т̆фу, йытă пиђĕ!

КРИШША (*Тиххăна пирус парат̆*). Ме хаклă йышши пирус турт. Тĕтĕмне çăт. Çапла, Тиххăн (*тĕтĕмпе ăнтăхса кайат̆*). Ф-у-у, куççуљ тухрĕ.

КРИШША (*кулат̆*). Ха-ха-ха! (*Çитăрăв пӳлĕмрен тухат̆*).

IV.

ÇИТĂРĂВ. Йепле вăл калаçма вĕреннĕ, астуха ес ăна? Ах, кĕлĕмçĕ! Тавлашат̆ вĕт (*ђей ĕçме ларат̆*). Сăмах

уҫма памасӑ. Такам вӗрентнӗ. Капла калаҫакан марҕҕӗ вӑл.

КРИШША. Кам вӗренттӗр, кӗтӳҫ Макар ывӑлӗ, Илле вӗрентет. Хуларан вӗренсе килнӗ. Куљтгурлӑ ҫын пулнӑ. Ирӗк панӑ вӗсене. Виҫӗмкун тата ҕухӑнсен пухӑвӗ туса иртернӗ теҫҫӗ. Темӗскер тума шутлаҫҫӗ. Тем ҫитмест вӗсене?

ҪИТӐРӐВ. Мӗн ҫитмест? Мӗн кирлӗ вӗсене? Пушӑ кирлӗ! Ӗлӗк уретнӗкӗн пурҕҕӗ вӗтха, ҕӗн пушӑ. Ҫавӑ кирлӗ вӗсене. Илле пӑлхатать, ҫавӑ ниҫта кӗреймесӗр ҫӳрет.

МАРИНЕ (*калаҫма сӑмах тупӑннипе савӑнса*). Ҫавӑ, ҫавӑ шуйттанӗ. Ҕиркӗве те хуптармалла, пупӑн тыррине хыснана илмелле тесе вӗрентет. Ҫаклатӗҫха сӑнсӑра.

ҪИТӐРӐВ (*аллине сулса*). Ан шавлӑрха есӗр, пире калаҫма парӑр. Та, Крикори Петровӑҕ, ҫынна нийепле те йурама ҫук. Ҫак Тарасах илер, мӗн усал тунӑ епӗ ӑна? Ирӗксӗр тытса ӗҫлеттермен, хӑй килнӗ. Ӗҫленӗшӗн ахаљ мар, тӳленӗ.

КРИШША. Конешнӑ, конешнӑ. Анҕах ӑна пӗлмеҫҫӗ вӗсем. Експлоаттатси теҫҫӗ. Ӗлӗк, салтака кайиҕҕен Илле пит йӑваш ҫӳретҕӗ...

МАРИНЕ. Е-е-й! ӗлӗкне те, ан кала, Кришша. Ӗлӗк те ҫавах. Пахҕаран улма вӑрлакан камҕҕӗ? Ҫавӑ пурне те йертсе ҫӳрекенни. Пӗрре ҫапла ман пахҕана пӗр кӗтӳ пухӑнса.

ҪИТӐРӐВ (*аллине сулса*). Есӗр, хӗрарӑмсем, вӑл ӗҫе хутшӑнмасан та йурӗ: мӗн пӗлетӗр есӗр? Ӗҫӗр ав ҕей, ҫийӗр улма!

ВАССА. Пирӗн ҕӗлхе ҫуким? Ма ҕаран калаҫма!

ҪИТӐРӐВ. Пӗлсе калаҫас пулать. Есӗр мӗн пӗлетӗр?

КРИШША (*Йевкен ҫине пӑхса*). Хӗрарӑмсӑр та пурӑнма

çук тĕнҫере, Раман Çитăрҫҫă. Вĕсемсĕр илем çук! Епĕ хам вĕсемсĕр пурнаймастăп.

ЙЕВКЕН. Тĕрĕс калаť вĕт вăл, атте. Есĕ ăна, парап-пан пек пустуй шаккаť тетĕн (*Кришша вăтаннипе пĕрре Йевкен çине, тепре ашшĕ çине пăхаť*).

ÇИТĂРĂВ (*çилленсе*). Ну, çитĕ сана! Мĕн каланине ху та пĕлместĕн! Хăна каҫҫа пама вăхăт çитнĕ (*Йевкен вăтанса пуçне усаť*). Хаҫ те ăс кĕмен. Шухăшласа калаçас пулаť. Ťфу!

ТИХХĂН (*сĕтел патне пырса*). Мана та çупа ҫăкăт парха! Хи-хик, ихихик...

ÇИТĂРĂВ (*кăшкăраť*). Кай кунтан, сĕлехуна йухтарса ан çӳре. (*Арăмне*). Уйрăм сак çине пар çавна апат.

ВАССА. Ёлкĕрĕха кайран та, хăнасем кайсан çитерĕп...

ÇИТĂРĂВ (*Кришша йеннелле пăхса*). Кăçал налукпа пĕтерме тытăнҫĕç мана Тарас пеккисем. Кула-а-ак теççĕ. 160 пăт хуҫĕç. Ман тырра пĕтерес терĕç пуҫ. Тата сулăм укçи илесшĕн. Куҫтту-у-ră кирлĕ вĕсене. Шку-у-ул йусаттарас! Çимеллисем çук, куҫттурă кирлĕ. Вăт пурăн вĕсемпеле, Крикори Петровăҫ! Есĕ мĕн пуçна уснă?

КРИШША. Пуçа тĕрлĕ шухăш кĕрет вăл.

ÇИТĂРĂВ. Ан хуйхăр, ан хуйхăр, ĕçӳ сутра аван иртсенех паратăп хĕре, анҫах сут пулса иртиҫҫен,— çу-ук, ан та шухăшла...

КРИШША. Ун çинҫен кунта калаçмаççĕ, Раман Çитăрҫҫă.

ÇИТĂРĂВ. Мĕншĕн калаçмалла мар, ытлашши кам пур кунта, Маринеи? Марине вăл...

КРИШША. Çапах та... Урăх сăмах çуким? Çавăнпа пуçа çавăраççĕ. Ҫорт снает! (*Тиххăн сентĕре çине хăпарса матҫҫа çине сурса выртаť*).

ÇИТĂРĂВ. Ан кăшкăраш, ан çилен? Хаçатсем вулакалати? Китайпа ĕççем мĕнле пыраççĕ? „Пирĕнне“ хĕртесçĕ пулĕ. Хе-хе-хе-хе-ха-ха-ха. Китай вăл, пĕр тытсан пултарат.

МАРИНЕ (*васкаса*). Пĕркун е іĕ Именкассине кайсан .

ÇИТĂРĂВ. Ну! ну! ну!.. Хаҫ çеç каларăм, мантăрим?

ВАССА. Есĕ вара çав, калаçма памастăн. Пĕр ĕç çинҫен калаçасшăн санпа вăл.

ÇИТĂРĂВ (*аллине сулса*). Кайран, кайран калаçăпăр сирĕнпе. (*Кришшана*). Пайан темшĕн шăлна çыртнă есĕ? (*Арăмне*). Тултарха тепĕр курка. Ĕç наҫарланман пулĕçке? Ес веççолăй пулаканҫҫĕ (*пуçне суллат*). Çу-у-ук, мĕн те пулсан пулнă пулĕ сана.

ТИХХĂН (*сентĕре çинтҫен*). Анне, çупа ҫăкăт парха, çийес килет (*йĕрен пек тăват*). Хăйсем çийеççĕ, мана памаççĕ. (*Калăп тытса*). Çакăнпа йарăп акă, памасан.

ÇИТĂРĂВ (*кăшкăрат*). Ҫарăн! (*Арăмне*). Пар çавна мĕн те пулин.

ВАССА (*ҫăкăт тата пĕр татăк çăкăр илсе парат*). Ме, çи, ĕмĕр курман пек хăтланатăн. (*Тиххăн ĕхĕлтетет*). Мана ку пĕрре хыпма çеç. Хе-хе-хе.

КРИШША (*аллинтҫе пирус, калла-маллă уткалса çӳрет*). Пĕрмай хаçат вулама вăхăт çук манăн. Унпа вăхăта иртерсе лар. Ăнланмаллата çырмаççĕ. (*Мăшкăлса*). Коллективисатси орканисатси, самокриттĕк... Вырăсла луҫҫĕ ăнланмалла, анҫах вырăслине те шанмастăп...

ÇИТĂРĂВ. Ну, çапах та мĕн çыраççĕ? (*Хĕрне*). Тултарха тепре. (*Йевкен тултарат*).

КРИШША. Ҫухăнсене колхос уçма сĕнеç. Ырра вĕрентеççĕйим? Укçашăн çеç ĕçлетĕп. Тата вытвишентсăсем хатĕрлеççĕ. Пирĕн пеккисене вырăнтан сирпĕтме шутлаççĕ. Курăпăр, пирĕнсĕр йепле ĕçлĕç. Тасату пуçласшăн. Мана та офитсе-е-е-р пулнă теççĕ.

ÇИТĂРĂВ. Пайан вăйлă ĕçсен те пыраҫҫĕ те, сăра ĕнер кăна пĕтрĕ, хăта килнĕҫҫĕ. Ерехне ниçта тупаймарăмăр. Ӳлĕмрен ĕçĕпĕр. (*Хĕрне*). Йевкен, кăрмафуна йарха, ҫун савăнтăр.

ЙЕВКЕН (*сĕтел хушшинҫен тухса кăрмафун патне пырать*). Хăшне хурас?

ÇИТĂРĂВ. Лайăххине хур. Ҫи аванне суйласа хур.

КРИШША (*Йевкен патне пырса*). Хам пĕрре суйласа хурамха

Йевкене айаккинҫен ҫĕпĕтет, Йевкен ăна пӳрнипе йунать. Иккĕн кулаççĕ, кăрмафун выҫать.

ТИХХĂН (*сентре çинҫен*). Атте, анса ташлами?

КРИШША. Йара парха пĕрре. Тĕлĕнтер!

ÇИТĂРĂВ. Тĕлĕнтеретĕп епĕ ăна акă. Пырса çӳçĕнҫен сĕтĕрсе антарсан!

ВАССА (*упăшкине*). Марине хĕр çинҫен калаçасшĕн.

ÇИТĂРĂВ (*кăрмафун каланă май урине йерипен тапса ларать. Аллине сулать*). Ан кансĕрле, ӳлĕмрен калаçăпăр ун çинҫен. Ан шавлăр.

ÇИТĂРĂВ. Лайăх йарати? Е? Револҫутси хыççăн мана пĕтерме шутларĕç. Налукпа та путарайmарĕç. Çаплаи, Крикори Петровăҫ?

КРИШША. Çапла, Раман Çитăрҫҫă. Тĕрĕс сăмах. (*Йевкене пăшăлтатса, тата пуçĕпе тайса, тулалла тухма тҫĕнет*).

ТИХХĂН (*кăрмафун майĕпе урисемпе тăпăртаттарать*). Аван выҫатçке... Ихи-хик, хик!

ВАССА (*кăрмафуна тҫарать*). Хаҫ ĕçкĕ вăхăҫĕ мар. Вăл шухăш мар.

КРИШША (*Йевкенпе пăшăлтатса тҫарăнсан, Тиххăн çине пăхса ахăлтатса кулса йарать, Йевкен тумланать, Кришша Çитăрăв патне пырса*). Кӳр аллуна, ĕç пурҫҫĕ, кайас.

ÇИТĂРĂВ. Есĕ, Крикори Петровăҫ, хамăр çын. Ха çат хыпарĕсене асту. Паллăрах хыпар пулсанах килсе каласа пар. Сыхă тăрар. Есĕ хамăр çын!

КРИШША. Йурĕ, йурĕ, Раман Çитăрҫҫă. (*Васса патне пырса*). Сана та спаççипă. Килсе ҫăрмантаратăп хăш ҫухне!

ВАССА. Лармаллаҫҫĕха санăн. (*Маринене*). Çи есĕ, çи, вăтанса ан тăр.

МАРИНЕ. И-и, епĕ халĕ те, килти пек.

КРИШША (*Йевкен патне пырса*). Васкарах. (*Йевкен тумланса тухат*).

V.

ТИХХĂН. Атте, туй хăçан пулат (*сентĕре çинҫен урисене усса йурлат*). Айҫа-а-аканам, ай-амайуим. Ихи-хик...

ÇИТĂРĂВ (*пырса пиçиххипе çапат*). Ак сана, алҫаканам. (*Тиххăн пытанат*).

ВАССА. Хытăрах пар, хытăрах!

ÇИТĂРĂВ. Пуçна çапса çурăп (*пырса ларат*). Тултарха тепре.

МАРИНЕ. Тăраниҫҫенех ĕçрĕм. (*Çитăрăва*). Çав хĕр пирки килнĕҫҫĕ епĕ. Калаçасшăн мар темшĕн. Йе урăххине паратри?

ÇИТĂРĂВ. Ун çинҫен сăмах та ан хускат. Куртăн, кам ларҫĕ сĕтел хушшинҫе. Çавă пулат манăн кĕрӳ.

МАРИНЕ. Апла пулсан ма çӳретрĕр мана? Миçе килтĕм? Малтанах каламалла!

ÇИТĂРĂВ (*аллине сулса*). Е-е-ей, сирĕнпе калаçса, çăвар тутине сайа йани çеç!

МАРИНЕ (*Вассана*). Ытлашши ан калаç тетĕн. Миçе килтĕм сирĕн пата, хăв та пĕлетĕн. Мĕн ҫул çăпата пĕтертĕм...

ВАССА. Çапла пулĕ те, ан шавла, ватти çиленет вăл. Ӳлĕмрен калаçăпăр ун çинҫен. Тепре килсе лар.

VI.

(*Каратђăм васкаса кĕрет*).

КАРАЂĂМ. Пĕтрĕмĕр, Раман Çитăрђђă. Пĕтетпĕр!..

ÇИТĂРĂВ (*сĕтел хушшинђен сиксе тăрса*). Мĕн пулђĕ? Шуť тăватни есĕ?

КАРАЂĂМ. Каккуй шуť тума! Шупашкартан рапођђисем килнĕ.

ÇИТĂРĂВ. Мĕн тума?

КАРАЂĂМ. Пуйансене пĕтĕмпех пĕтермелле теççĕ, колхос уçас теççĕ.

ВАССА (*сăхсăхса*). Ай, тур, тур, тĕнђе пĕтет пулĕ.

ÇИТĂРĂВ. Кам каларĕ? Ăçтан пĕлтĕн? Ларха кунгалла, кала йĕркипе.

КАРАЂĂМ. Шанђăклă çынтан илтрĕм. Ытлашши йапаласене, ытлашши тырра пытарас пулаť. Çавăншăн килнĕ.

ÇИТĂРĂВ. (*пуçĕ çавăрăннипе пукан çине тĕшĕрĕлсе анаť. Арăмне*). Парха шыв, сивĕ шыв пар. Ф-у-у-у! Пуç ыратса карĕ. Фу-у!

ВАССА (*куркапа шыв параť*). Ме сып, сып ђасрах!

КАРАЂĂМ. Ку кăна ниђђаваха, хаçатсенђе çырнă тăрăх, пире пĕтĕмпех пĕтермелле. Колхос тăваççĕ, пуйансен пурлăхне туртса илмелле теççĕ. Ну мĕнле шухăшлан, мĕн калан?

ÇИТĂРĂВ Ним шухăшлама та пĕлместĕп.

ВАССА. Пытарас пулаť йапаласене. Тырра кĕрўсем патне ăсатас.

КАРАЂĂМ. Кайа йултăр. Пулмасť хаљ. Маларах кирлĕђђĕ. (*Паусă*).

ÇИТĂРĂВ (*сиксе тăрса*). К ђортту! Тĕрĕс мар ку! Хаљ вунсаккăрмĕш çулхи мар! Хаљ тырра налук тăрăх

тӳлемелле! Ытлашши хамăра йулмалла! Улталаймăн мана, пĕлетпĕр ăна.

КАРАЂĂМ. Акă курăн, мана мĕн. Суйеçтерсе тăмăп. Ёнер те ђухăнсен пуххи пулнă тет. Ёнерхине сисеймерĕм. Кайса пăхаймарăм. Илле çавăрат халăха, çав йавăл, пăтратат. Района темиçе хут кайнă, çав колхос пирки. Уçасах теççĕ. Вăт мĕнле ĕçсем.

ВАССА (*сĕтел çинтђен пуçтарса*). Тăрăнђĕç пире йалĕпех. Пурăнма памаççĕ.

ÇИТĂРĂВ. Та-а, пурнăç нађара карĕ, Карађăм, каплa пулсан. (*Арăмне кăшкăрса*). Ђей куркисемпе аппалaнса ан тăр, арђусене питĕр, ытлашши тумтирусене тухса пытар. Саттина тĕплĕрех вырăна пытарасђĕ.

ВАССА. Йурĕ, йурĕ. (*Пĕрре пӳлĕме кĕрсе кайат, тепре калла тухат. Артђине пĕрре уçат, тепре питĕрет*). Турă сиртĕр ку инкеке... Ех, тур, тур!

ТИХХĂН. Кӳр кунта, анне. Ихик-ихихик!.. Çакăнта пытарăр! Кунта тупаймаççĕ. Кунта парăр!

ÇИТĂРĂВ. Мĕн тумалла пулат ĕнтĕ пирĕн?

КАРАЂĂМ. Мĕн тăвас тетĕн. Кам пирĕн майлă? Епĕр вĕт йалĕпе те 5—6 çеç, пире хирĕç пĕтĕм йал, патракĕ, ђухăнĕ, вăтамĕ... Е-е-й, мĕнле калан. Анђах çапах та алăсене усас пулмаст, ђарас пулат вĕсене!

ÇИТĂРĂВ. Мĕнле ђарас, калаха? Ес мĕнле шутлан? Ирт, лар кунталла. Мĕн тĕлленсе тăратăн унта урай варринђе?

КАРАЂĂМ. Епĕ пађăшкăпа калаçса пăхрăм, тупăпăрха унта мелне. Ёнер çĕрĕпе пуç ыратиђђен шухăшласа, калаçса лартăмăр унпала. Вăл пайан сирĕн пата килесшĕнђђĕ.

ВАССА (*пусмисене илсе пӳлĕме пытарат*). Пађăшка тетни?

ÇИТĂРĂВ. Паҫăшка çав, паҫăшка! Сана ихлетмесен те йурĕ. Ёçне асту есĕ...

ТИХХĂН (*сентĕре çинҫен анат*). Паҫăшкан çÿçĕ вăрăм, хăратăп епĕ унтан. Ой-ой!

ÇИТĂРĂВ (*кăшкăрса*). Тумлан та тух есĕ урама, çилле кÿрсе ан тăр кунта!

ТИХХĂН (*тумланса тухса кайат. Çĕлĕкне кайалла тăхăннă*). Тулта луҫҫĕ, ихихик, ихик!

VII.

ÇИТĂРĂВ (*Караҫăма*). Айтаха пÿлĕме, калаçăпăр унта (*пÿлĕме кĕрсе кайаççĕ*).

VIII.

ВАССА. Йевкенĕ ăçта тухса ҫупнă тата? Унăн ама йытă пек ҫупасси çеç (*шухăшлат*). Ахаҫ çеç хăратмарĕши вăл? Хăш ҫухне шуť тума йуратаť вăл Караҫăм. Акă çитрĕ хайхи. Турă кăна сиртĕр ёнтĕ ку инкеке. (*Йевкен кĕрет*).

IX.

ВАССА (*Йевкене кĕрсенех*). Ăçта ҫупса çÿрен? Кунĕн çĕрĕн Кришшапа.

ЙЕВКЕН. Ернерен çураçап тет, анне. Йуратаť вăл мана!

ВАССА. Сÿпĕлтетсе ан тăр, çÿçĕнтан сĕтĕрсе илĕп. Курмастăним епĕ ниçта кайса кĕрейменнине? Опăскă тумалла тет. Салтăн ҫасрах, пулăш мана! Пусма тавара пытарас. Ну, хăвăртрах!

ЙЕВКЕН. Мĕнле опăскă?

ВАССА. Кайран калаçăпăр, тытăн ҫасрах. (*Йевкен те артҫаран йапаласене пăлтăра куçарма тытăнат. Васкаса йапалисене пытараççĕ. Ним тума аптăраса ҫупса çÿреççĕ*).

ЙЕВКЕН. Мĕн тăвасха манăн? Мĕн ĕçлемелле?

ВАССА (*патне пырса аллисене саркаласа*). Пилĕке тытса ташламалла. Аннӳ çапăнса ӳкес пек васкаса çӳрет, есĕ ним тума аптранă. Айта пулăш мана, арђана тĕпсакайне антарар. Пĕр килсен вĕсем ухтарма тытăнĕç. Çине тăхăнма кĕписем çук..

ЙЕВКЕН (*амăшпе артђа йăтса*). Тĕпсакайĕнђе тупаймĕç тетни? Тӳрех çавăнта анса пăхаççĕ.

ВАССА (*аптраса пӳртре калла-малла тђупкалаť*). Пéлеççĕ, ес каламасан та, тӳрĕрех йăт, ан силле. Йерипентерех, пуç çине антаран. Пуçа çĕмĕрес тетни мĕн?

ЙЕВКЕН. Тытнăçке ĕнтĕ.

(*Тиххăн тултан кĕрет. Шăннă, тђĕтрет*).

## X.

ТИХХĂН. Фу-у-у, сивĕçке тулта. (*Тĕпсакай уçнине курсан*). Хуп, Йевкен, хуп, шуйтан пур унта. Мăйракалли. Мăйракисем вăт çапла тăрăшшĕ (*аллисемпе кăтартаť*). Ой, хăратăп епĕ унтан. Пĕтерет вăл мана. Хуп ђасрах...

ЙЕВКЕН. Супĕлтетсе ан тăр, тытса йарăп акă тĕпсакайне, мĕн шăлна йĕрсе ларан. У-у-у! сăнсăр, шыври шуйтан. Сантан хăвăнтан çын хăрамалла. Çĕлĕкне те çын йевĕрлĕ тăхăнма пĕлместĕн.

ТИХХĂН. Ихик-ихихик. Сана Кришкăна кађђа парсан, туйра ташлап вара. Ихик. Çапла ташлатăп.

ЙЕВКЕН. Çитĕ сана. Салтăн та, хăпарса лар сентĕре çине, ђорт!

ТИХХĂН (*пит çăмартине сывлăшпа вĕрсе хăпартаť те аллисемпе парăппана çапнă пек çапаť*). Пăхха, парăппан пек (*ĕхĕлтетет*). Есĕ тăваймастăн.

ЙЕВКЕН. Пирĕн йата йама çеç çуралнă есĕ, есрел! Пуçна пулашшĕ йапала!

ВАССА (*пуçне кăтартса.*) Тумтирӳсене илсе кил. (*Тиххăна курсан*). Ку анкăминкă татах кĕҫĕимха? Хăпарса вырт çӳле!

ЙЕВКЕН (*пĕр çĕклем туммир парат*). Варласа пĕтерен ĕнтĕ унта. Кĕлете хумаллаҫҫĕ.

ВАССА. Варланине тасатăпăр ăна, çĕтĕк çурăксем илсе кайсан. Кур, тавай (*Клавйе пырса кĕрет*).

## XI.

КЛАВЙЕ. Мĕн пулнă капла сире. мĕн хыпаланаттăр?

ВАССА (*пуçне кăтартса*). Кам сасси унта? Е... Есĕ иккен? Ирт, лар. Йевкен, тытха аларан, тухма çук!

ЙЕВКЕН (*амашне аллинтҫен тытса*). Лайăх витрĕне?

ВАССА (*çилленсе пĕлмен пек пулса*). Йыт хӳри мари акă, йыт хӳри. Шырарăм, шырарăм, тупса пулмарĕ, хĕрĕм. Хăв анса шыра, ман куç витĕрех курмасĕ. (*Клавйене йăпăлтатса*). Çирĕм пус укçа ҫăмрĕ шăтăкран тĕпсакайне! çавна шырама анаттăм та, ăçта-а-а унта, тупма çук, тупаймарăм. (*Йевкене*). Каларăм сана. (*Йевкен кайри пӳртне тухса кайат*).

## XII

КЛАВЙЕ. Раман пиҫҫе килте çуким? Кирлĕҫҫĕ вăл мана.

ВАССА. Килтеҫҫĕха, килтех. Пӳлĕмре хăна пур. Пит кирлĕим? Кирлĕ пулсан ҫĕнсе кăларас.

КЛАВЙЕ. Кирлĕрен килтĕм, Васса тăхлаҫ. Калаçмалли пурҫҫĕ.

ВАССА (*кăшкăрат*). Ватти, ватти тетĕп, Клавйе кин санпа калаçма килнĕ.

ÇИТĂРĂВ (*пӳлĕмрен*). Çиҫҫас, тухап.

ВАССА (*Клавйене*). Мĕнле пурăнкалатăр?

КЛАВЙЕ. Мĕнле пурăнасси паллах ĕнтĕ, ҫухăн мĕнле пурăнтăр вăл?

ВАССА. Е-ей! ан калаç, Клавйе кин. Кăҫухне ҫухăнĕ те, пуйанĕ пĕрех. Пурте ҫухăн кăҫухне. Тавар çук, ку çук, тепри çук. Мĕнне калан. Самана мар ĕнтĕ, çунса кайтăр. Сире пурăнма луҫҫĕ хаљ, налук илмеççĕ сиртен, пĕтсен çиме параççĕ. Пире çав тери тăрăнҫĕç. Кулак теççĕ, мĕн кулаклăхĕ пур унта. Ҫухăнсене луҫҫĕ пурăнма.

КЛАВЙЕ. Сирĕн те ҫухăн пулас килетим? Апла аван пулсан есĕр те пулса пăхăр еппин.

ВАССА. Ытлашши калаçатăн, Клавйе кин, апла калаçма йуратĭ?

КЛАВЙЕ (*путмар çине ларса*). Ҫухăнсене пурăнма аван тетĕнçке ху. Çавăнпа калап.

ВАССА. Есĕ те çав, кин, хăв аҫуна ҫараймасгăн. Пĕтĕм йала пăлхататť вĕт. Темĕскер, колхосĕ мĕнĕ. Таçтан шухăшласа кăлараççĕ? Мĕне кирлĕ? Ĕлĕк пирĕн патăрта ĕçленĕ ҫухне тутă пулнă, çийе тăхăнмалли те пулнă. Пĕркун ман ваттипе пикенсе вăрçаť тет. Вăт çамрăк те ăна. Ҫарха есĕ ăна. Ҫар!.. Çылăха пĕлес пулаť.

КЛАВЙЕ. Мана итлемест вăл. Хăй ĕçне хăй пĕлет пулĕ. Тухмарĕçке ку, ман вăхăтăм çукҫĕ. Шыв кӳме каймалаҫҫĕ.

ВАССА. Тухĕха (*кăшкăраť*). Ватти, пушанайратни есĕ? (*Çитăрăв пӳлĕмрен тухаť*).

XIII.

ÇИТĂРĂВ (*Клавйене*). Мĕн ĕçпе?

КЛАВЙЕ. Çав çурмалла акни çинҫен калаçма кĕтĕм.

Ана калла тумалла пулаť. Кăçал çурмалла акма параймастпăр. Илле вăрçаť.

ÇИТĂРĂВ. Сататăк панине илсе килсен, мушнĕ. Илнĕ тырра кÿрсе парăр, вара условийе калла паратăп.

КЛАВЙЕ. Кĕркуннесĕр параймастпăр. Хаљ ниçтан илме çук.

ÇИТĂРĂВ. Ну епĕ те условийе кĕркуннесĕр парса йама пултараймастăп. Иллене çапла кала. Çăварĕ çÿлтеха унăн. Никама та парăнасшăн мар.

КЛАВЙЕ. Епĕ кунта килессине ăна каламан, вăл килме хушмарĕ. Ан çÿре, терĕ. Саккун тăрăх илĕпĕр тет.

ÇИТĂРĂВ. Вă-ă-ă-н йепле! Са-ккун тăрăх. Мĕнле саккун тупнă вара вăл? Саккуншђĕк тупăннă. Йепле ăстана тухнă вăл. (*Хьиттăн*). Калла тумастăп. Ывăлу килтĕр, унпа калаçсан мĕн пулĕ.

КЛАВЙЕ. Тем парсан та килмест вăл сирĕн пата.

ÇИТĂРĂВ. Килмесен килмĕ. Йĕрсех тăмăпăр.

КЛАВЙЕ. Раман Çиťăрђђĭ, ырă пулăр ĕнтĕ тархасшăн

ÇИТĂРĂВ. Çук, ан калаç та, пулмасť. (*Клавйе пуçне тњиксе тухса кайаť*).

## XIV.

ÇИТĂРĂВ. Ав, çÿрет, çавăн ывăлĕ йала пăлхатаť! Çавă вĕсен пуçлăхĕ. (*Шăппăнтарах*). Итеме пытарнă тырра пăхса килтĕни пайан? Пит сыхă тăмалла. Халăх усала карĕ Çаклатса кайĕç. Пур йал выçăпа пÿхнĕ. Çисе йарас пек тăраççĕ.

ВАССА. Йевкен пăхса килтĕм терĕ. Тăраť пулĕха, ăçта кайтăр. Кам систĕр?

ÇИТĂРĂВ. Кăђухнехи етем теме те сисĕ. (*Йевкен кайри пÿртрен апат-çимĕç йăтса кĕрет*).

## XV.

ЙЕВКЕН. Пайан миçе хут ђей вĕретрĕм. Апат çине апат.

ВАССА. Вăл ĕç те йавăр пулђи? Хăнасем пулсан ĕçлес пулаť. Сăра çук хаљ. Ыран лартмалла пулĕ пĕр 3—4 ђўлмек. Сăрасăр нуша ку. Хăнасене ђыслама та çук.

ÇИТĂРĂВ. Хайартарах тăвăр. (*Йевкен сĕтел çине çимĕç лартаť*). Теçетке çăмарта пĕçер. Сарçу ларт. Пыл илсе кĕр. Илтетни?

ВАССА. Илтепçке, илтеп, клуххуй мар. (*Йевкене*). Пыл илсе кĕр.

(*Йевкен тухса кайаť*).

## XVI.

ÇИТĂРĂВ (*пўлĕме пăхса*). Карађăм, тух кунта, колхос тесе пуçа усса лараймăн, шухăшлас пулаť мĕн те пулсан. (*Карађăм пўлĕмрен тухаť*).

## XVII.

КАРАЂĂМ. Пĕркун Љавапа Илле ђиркĕве хуптарасси пирки хăйшĕн пуху тунă. Çамрăксем ваљђи шкул уçасшăн тет. Ватăсем аран ђарнă. Вăт есĕ. Е? Еккей пулаççĕ ĕмĕтсĕрсем.

ÇИТĂРĂВ. Мана Крикори Петровăђ каласа тĕлĕнтерђĕ. Тĕлĕнтĕм шалт. Урнă пуљ халăх! (*Йевкен пыл илсе кĕрет*).

## XVIII.

ЙЕВКЕН. Пыл шăнса ларнă. Кашăка хуçрăм. Пайан ĕç хирĕçнĕ çемĕн хирĕçет.

ВАССА. Есӗ ҫапла вӗт. Санран сийен тумасӑр пулати. Сан аллусем ҫын аллисем пек мар вӗт. Хиретӗн вара ђашӑк-ҫӑпалана. Тфу-у,—хӗр пулса ӳсрӗн, йӗркене вӗренеймерӗн.

ЙЕВКЕН. Ҫитӗ ӗнтӗ пайан. Епӗ йури ватманҫке ӑна. Йалан епӗ айӑплӑ.

ВАССА. Тавлашса ан тӑр кунта! Кайса лэрт! Кайран калаҫӑпӑр! Епӗ санӑн аннӳ пулатӑп пулӗ, йе кӳршӗ арӑмӗи? У-у-у-у, сӑнсӑр!

ҪИТӐРӐВ. Ђарӑнӑрха есӗр харкашма. Йӑлӑхтартӑр. Сӗтел ҫине астӑвӑр. (*Каратђӑма*). Лар кунтарах. Хыпкалар. Урӑх нимӗн те ҫук. Самани ҫаплалла.

КАРАЂӐМ. Ӑна пӗлетпӗр ӗнтӗ каламасан та (*ларат*).

ҪИТӐРӐВ. Малтан Кришша килсе хӑратса карӗ. Хаљ есӗ тата пит хӑруш хыпар илсе килтӗн. Ху килӗнте те хӑраса ҫеҫ пурӑнатӑн. Хаљ такам килет тесе, хаљ темӗн пулат тесе, ђӗре вырӑнта тӑмаст.

КАРАЂӐМ. Самани ҫапла пулсан мӗн тӑвасха ӑна? Вӑхӑтра систерес терӗм!

ҪИТӐРӐВ. Ун сийенӗ ҫук. Ђӗре ыратнипе калатӑп. (*Ҫав вӑхӑтра сентӗре ҫинтђен Тиххӑн сиксе анат*).

ТИХХӐН. Ай-йай. О-о-х. Ђут ҫеҫ майран пӑвса илетђӗ. Пӗтеретђӗ. Аран тарса хӑтӑлтӑм (*амӑш патне пырса ӑна кӗпи аркинтђен тытат*). Хӑваласа йар, анне, авӑ майракисене тӑратса килет. О-йой. Хӑратӑп. Хӑвала, анне, хӑваласа йар.

ВАССА. Нимӗн те ҫукӗҫке унта. Мӗнтен хӑратӑн? (*Ыттисене*). Хӑруш тӗлӗк курнӑ пулас. Ҫапла вӑл пирӗн. Ҫӗрле те сиксе тӑрса ахӑрашат. (*Тиххӑна*). Ну ҫитӗ, ђарӑн. Мӗн, мелке тӑмани пур унта. Пӑх лайӑхрах.

ТИХХӐН. Хӑратӑп, анне. Пӑвса илет вӑл мана. (*Амӑшӗ ӑна кутник ҫине кайса лартат. Вӑл кулкалама тытӑнат*. Хаљ хӑрамастӑп ӗнтӗ. Тарђӗ вӑл.

КАРАЂĂМ. Ишек ђиркӳне илсе кайса пăхаймарăр пулаť. Сире миçе каларăм ун çинђен. Итлеместĕр.

ÇИТĂРĂВ. Кайман мар, темиçе хут та кайса пăхнă. Усси пулмарĕ. Хаљ ăна та хупнă теççĕ. Те тĕрĕс вăл.

КАРАЂĂМ. Нумай пулмасť хаçат çинђе çырнăђђĕ. Ёлкĕрнĕ пулас унта та. (*Йалисполниттĕл кĕрет*).

XIX.

ЙАЛИСПОЛ Раман Çитăрђђă, сана совета ђĕнеççĕ.

ÇИТĂРĂВ (*тĕлĕнсе*). Мĕн ĕçпе? Кам ђĕнет?

ЙАЛИСПОЛНИТТĔЛ. Пĕлместĕп мĕншĕнне. (*Караљ ăма*). Есĕ те кунтах иккен. Сана та ђĕнеççĕ.

ÇИТĂРĂВ. Хуларан кам та пулсан килнĕи? Кам килнĕ? Ăçта парха, матка, кив сăхмана. Кайасах пулаť.

КАРАЂĂМ. Мĕн ĕçпе, вçотки?

ЙАЛИСПОЛНИТТĔЛ. Пĕлместĕп.

ТИХХĂН. Атте, епĕ те пырами?

ÇИТĂРĂВ. Хуп çăварна. Сӳпĕлтетсе ан лар. (*Тухса кайаççĕ, Тиххăн йĕрет*).

ВАССА. Тем каласан та çав ĕçпе. Опăскă тумалла пулĕ. Е-е-х çитрĕ самана.

*Ђаршав.*

## ИККĔМĔШ ПАЙĔ.

Ђухăн хресђен çурђĕ. Илле сĕтел хушшинђе „Ушкăнла хуçалăхсем“ кĕнеке вуласа лараť. Çтена çумне шурналтан каснă тĕрлĕ карттинсем çапкаланă. Турăш умнерех (иккунсем çук) Ворошшилăвпа Калинин портређĕсем. Клавйепе Марине тытăшса ӳкес пек тавлашса кĕреççĕ.

I.

КЛАВЙЕ. Ку иккенне пĕлнĕ пулсан епĕ сана ĕнсӳнтан çеç ђышса кăларса йанă пулăттăм. Çитменнине тата, намăса пĕлмесĕр, тунатăн. Еп çĕмĕрмен тетĕн, есĕ пулмасăр, кам пултăр?

МАРИНЕ. Илсе кайнă ђухнех çĕмрĕкђĕ вăл. Еп çĕмĕрмен ăна, турăшăн ваттăк епĕ мар.

КЛАВЙЕ. Ес пулмасăр, кам пултăр! Хăйне хăй шартлатса çурăлса кайман вĕт? Кĕççе пит. Çĕмĕрнĕ те каламасť те. Пăхмасăр илсе йулнă пулсан?

МАРИНЕ. Еп çĕмĕрмен йапалана йепле епĕ хам çине илем! Вăт каларĕ.

КЛАВЙЕ. Ан ђăрлатса тăр! Ђарăн!

МАРИНЕ. Хăв кăшкăрашан вĕт! Епĕ мар.

КЛАВЙЕ. Ме, кăна калла хупа илсе кай, мана çĕнĕ илсе пар! Сана та çĕмĕрттер, тепĕрне те çĕмĕрттер. Укçа çитереймĕн сирĕнпеле!

МАРИНЕ. Çĕмрĕк ђўлмеке мĕншĕн йатса çўресха манăн? Ухмах мар епĕ. Сана илсе пар, тепĕрне илсе пар, укçа ăçтан çитермелле.

КЛАВЙЕ. Ма çĕмĕртĕн апла пулсан?

МАРИНЕ. Çĕмĕрмен тенĕ сана. Йури кутăнланатăн есĕ.

ИЛЛЕ. Ђарăнатри есĕр пайан, йе тăтăшсах çапăçатри? Ђарăнĕçи, ђарăнĕçи тесе тăтăм, çук, сăмахăрăн вĕçĕ курăнмасť. Е-е-х, пурнатăр вĕт çапах. Ђўлмекĕр 20—30 пусран ытла тăмасť пулĕ, уншăн хаклă йуна пăсатăр, тата мана ĕç тума памастăр.

КЛАВЙЕ. Ђўлмеке çĕмĕрнĕиç! Вĕр-çĕнĕ ђўлмеке. Йармăккăра илнĕђђĕ (*кăтартать*).

МАРИНЕ. Илсе кайнă ђухнех çĕмрĕкђĕ вăл.

ИЛЛЕ. Ну йармăккăра илнĕ пултăр. Мускаврa илнĕ пулсан та station уншăнах çапла кăшкăрашни пĕрте килĕшўллĕ мар ĕнтĕ вăл, анне. Хам илсе парăп çĕмĕрĕлменнине. Халђ ĕçлеме ан ђарăр, тархасшăн.

КЛАВЙЕ (*çиленсе*). Вара, вара укçу нумай санăн. Есĕ те кунĕн-çĕрĕн кĕнекепе. Сан пирки мана вăрçаççĕ. Ларасђĕ кутна усса тек кăна. Пĕтĕм йал сан çинђен калаçать.

ИЛЛЕ. Пĕлетĕп епĕ ăна, йуратнă анне, аван пĕлетĕп. Кам вăрçнине те туйатăп. Кулаксем вăрçаççĕ, ђухăнсем пулăшу кĕтеççĕ... Çав çук йапалашăн çав тери ахăрашма йурăти, анне?!

КЛАВЙЕ. Çук йапала пулати? Укçа парса илнĕ ăна! Санпала! Есĕ мĕн пĕлетĕн?

ИЛЛЕ. Виçĕмкун „Ирĕклĕх“ ертелне кайса курса килтĕм. Вăт пурнăç, вăт пурăна пĕлеççĕ çынсем, пирĕн пек мар.

КЛАВЙЕ. Сан çав сăмах ĕнтĕ, ђунна панă уншăн. Килнĕренпе пуça çавăрса пĕтерен.

МАРИНЕ (*аллине сулса*). Ан калаç тархасшăн. Илле шăллăм, ан мухта.

ИЛЛЕ. Ђимха, ђим, аллăна ан сулкала. Кайса курни вара есĕ вĕсем йепле пурăннине?

МАРИНЕ. Курмасан та пĕлетпĕр ĕнтĕ. Выçлăн-тутлăн пурăнаççĕ тет.

ИЛЛЕ (*хьıтă сасăпа*). Çук, Марине инке, сирĕн пек выçлăн-тутлăн пурăнмаççĕ вĕсем. Какайсăр йашка çимеççĕ... Анђах, епĕ ун çинђен калаçасшăн марђђĕха, вĕсен пурнăçĕ çинђен. Кайса курман есĕр, çынсем суйа сăмах каланине çеç илтнĕ. Кайса курас пулаť сирĕн. Вăт вара темĕскер те пĕр калаçма çавăнтах пăрахăр... Ытарма çук вĕсен пурнăçне: пĕрлешсе ĕçлеççĕ, ĕç пĕтсен клупа пуçтарăнаççĕ те, кĕнеке-хаçат вулаççĕ, пĕр-пĕринпе йĕркеллĕн калаçаççĕ, çамрăксем çпектаккăђ выђаса кăтартаççĕ. Пирĕн Хĕрлĕ çарти пек. Кунта килнĕренпе епĕ аптăрарăм шатах, ним тума пĕлместĕп. Хаљ йураť, колхос уçатпăр, вăл ĕç пулмасан, йе ăна уçма май пулмасан, епĕ кунта тем парсан та тăрас çук. Тепĕр хут, ирĕксĕр илмесен те, йăлăнса ирĕксĕрех Хĕрлĕ çара каймалла.

КЛАВЙЕ (*йĕрес пек*). Мĕн çитмерĕ вара? Манпа пурăнса йăлăхтарҫĕ те пулаӗи? Мана, мана ватăскере пăхас килмест пулĕ ĕнтĕ. Йăлăхтартăм пулĕ?

ИЛЛЕ. Унпа мар, хăнăхаймастăп епĕ хаҫ ĕлĕкхи пек пурăнма, çĕнĕлле пурăнас килет, йĕркеллĕ пурăнăç тăвас килет. Пуçларăмăр ĕнтĕ вăл ĕçе. Епĕр вĕреннĕ ĕлĕкренпех тискер кайăксем пек пурăнма, совет влаçĕ тем пек тăрăшсан та йĕркеллĕ пурăнма вĕренсе çитейместпĕр.

КЛАВЙЕПЕ МАРЙЕ (*харăс*). Ĕлĕк наҫар пурăннăим?

ИЛЛЕ. Мĕнтен аван пурăннă вара? Ĕлéкренпех сирĕн çире çак çĕтĕк сăкман. Апат шуратман паранкă, хăш ҫухне вăл та пулмасӗ. Çапла кунĕ - кунĕпе вăкăр пек ĕçлеттĕр, анҫах тырра ĕретлĕ ĕçлеменнипе, тырă хĕл каçма та çитмест. Е-е-х, мĕн калаçма-а-а. Кашни хăй анине çийелтен хăли-хали сухалакалаӗ те ни тырри, ни улăмĕ. Машшин кирлĕ, пĕрлешӳ кирлĕ (*шухăшлаӗ*). Вăйăм çитсен тем тăвăттăм, пайанах пурне пĕрлештерĕттĕм. Халиҫҫен йалта вуламалли çурт уçайман вĕт! Пăхăр, çамрăксем каçхине мĕн ĕçлеççĕ? Улахсем тăрăх, ах-ах-ах та их-их-их... Апла пурăнса йĕркеллĕ пурнăç тăваймăн. Вуламалли çурт уçайман. Халиҫҫен ҫиркӳпе пупшăн мĕн ҫул расхот кăларатăр. Турă çинҫе сирĕн шанҫăк.

КЛАВЙЕ. Мĕнтен кансĕрлет çав ҫиркӳпе пуп?

МАРЙЕ. Вăл ҫиркĕве хупасшăн тесе ахаҫ каламаççĕ иккен. Мĕнтен кансĕрлетха вăл сана?

ИЛЛЕ. Калаçсан сăмаха калаçса та пĕтерейменĕн, анҫах манăн вăхăтăм çук, токлат хатĕрлемелле... Ҫиркӳн сийенĕ пит пысăк. Пуп мĕн ҫул тырă пухаӗ сирĕнтен, çав тырăшĕн сирĕн пуçа тĕн сĕрĕмĕ йараӗ... Ӳлĕмрен калаçăпăр. Сирĕн хăвăрăн шухăш. Çапах та есĕр вилиҫҫен çав колхосăн илемлĕ пурнăçне туса кăтартасҫĕ. Унтан шанăттăрҫҫĕ...

КЛАВЙЕ. Сана Раман Çитăрҫҫă килме хушнăҫҫĕ...

ИЛЛЕ. (*тĕлĕнсе*). Раман Çитăрђђă? Ăçтан куртăн есĕ ăна? Йе татах кайрăни вĕсем патне?

КЛАВЙЕ. Кайса калаçса пăхас терĕм...

ИЛЛЕ. Ех, анне, миçе каланă епĕ сăна, ун патне ура йарса ан пус тесе. Есĕ хăвăннех. Ну мĕн терĕ?

МАРИНЕ (*вĕсен хушшине кĕрсе*). Вĕсем хĕрне çураçаççĕ. Кришшана кађђа парасшăн.

ИЛЛЕ (*алине сулса*). Вăл ђорт çнимха, хăтланђђăр. Ну, мĕн терĕ Çитăрăв сана, анне.

КЛАВЙЕ. Малтан илнĕ тырра кӳрсе парăр, тет.

ИЛЛЕ. Епĕ сана каларăм вĕт. Ыйтса вĕсенђен нимĕн те илейместĕн. Кĕрешӳсĕр нимĕн те парас çук вĕсем. Ђухăнсем нумайĕшĕ ăна аван пĕлеççĕ. Пĕтĕм ĕçхалăхĕ пĕрлешсе вĕсене пĕтерес пулаť. Вĕсене пĕтермесĕр йĕркеллĕ пурăнăç тума çук. Акă колхоса уçсан хăйсемех пĕтсе ларĕç те. Халђђен вĕсем ђухăнсен тарĕпе, пирĕн тарпа ырлăх курса пурăннă. Колхос уçсан патраксемпе ђухăнсем пурте колхоса çырăнсан, вĕсен ырлăхĕ пĕтет. Çавăнпа вĕсем колхоса хирĕç, çавăнпа вĕсем мана темĕн те пĕр каласа хăратаççĕ. Ниђђава! Вĕсем пеккисене кăна куркаланă...

КЛАВЙЕ. Вĕсемпе ăçтан кĕрешĕн, ађам, ăçтан çĕнĕн вĕсене, пуйансене...

ИЛЛЕ. Ђас ăнланас çук есĕр... Пайан, (*кулкаласа*) пайан епĕ сирĕнпе пухури пек калаçрăм. Ђĕре ђăтмасť хăш ђухне... Тем тăвăттăм. Тата нумай йулмарĕ ĕнтĕ... (*Кулкаласах*) Ну. килĕшрĕри, тавлашмастăри урăх?

МАРИНЕ (*васкаса*). Ну кайамха ĕнтĕ.

КЛАВЙЕ (*ăсатма тухаť*). Иљсе кил вара, Марине кин. (*Ентри васкаса кĕрет*).

II.

ЕНТРИ. Çунатпа вĕçсе çитрĕм, Илле Макарђ. Ташла пĕрре...

ИЛЛЕ (*тъупса пырат*). Çирĕплетним? (*Ăна ыталаса сĕтел патнелле утат*). Кŷрха, вулам.

ЕНТРИ (*хĕвĕнтъен кăларса парат*) Ме, акă вула. „Çаккахви“ çĕрне касса параççĕ.

ИЛЛЕ (*вулат*). Çĕнĕ устав илсе килтĕни?

ЕНТРИ. Пурне те йађĕç, пурне те. (*Хавасланса*). Вăт есĕ мана ĕçлейместĕн тетĕн. Куртăни? Халăхшăн йепле тăрăшатăп. Есĕ мана тăрăшмастăн тесе ĕрлентерен.

ИЛЛЕ. Сана мĕншĕн суйласа лартнă, халăхшăн тăрăшма пулĕ? (*Хутне тепĕр хут вулат*). Саккахви çĕрне касса памалла! Савăнтартăн пайан, Ентри пиђђе, çав тери савăнтартăн. (*Ун çĕлĕкпе пуçĕ çине пусса лартат*). Ах, ђорт, тытăнсан пултаран иккен. Тăрăшмасť тесе епĕ сана çиллĕм килнĕ вăхăтра çеç каласа йанă. Ан çилен. Малалла çанна тавăрса ĕçлĕпĕр. Ан çилен мана!..

ЕНТРИ. Уншăн çиленсе тăма... Çапах та сăмаха шухăшларах калаçас пулаť!..

ИЛЛЕ. Ну йурĕ, ђорт, лар кунталла. Кампа калаçрăн?

ЕНТРИ. Самăй аслипе калаçрăмăр. Пит йĕркеллĕ çын пулмалла, çепĕç калаçаť. Мĕн тетђĕр, аван ĕç теççĕ, мĕн вăй çитнĕ таран пулăшăпăр теççĕ. Çуракине машшинсем пама пулђĕç. (*Хĕпĕртесе*). Çав тери савăнтарђĕç мана пайан. Ташлассăм килет. Колхоссăр тéнке тухрĕ, нуша çитрĕ.

ИЛЛЕ. Ташлама ирха, акă колхосне орканисатсилесе ĕçе майа йарсан, вара ташлама та йураť. Ну, уставне мĕншĕн кăтартмастăнха?

ЕНТРИ. Ăна епĕ уйрăм хунă. Кĕссене ђикрĕм. Устав çеç мар, тата пушта та кĕрсе, тухрăм. Сана вађђи çĕнĕ шурналсем илсе килтĕм. Ме! Куратни. Хе-хе.

ИЛЛЕ (*пурне те илсе шурналсене сĕтел çине уйăрса хурат*). «Йалхуçалăх ертелĕн примерлă уставĕ», кăна çитес пухура сўтсе йавăпăр.

ЕНТРИ. «Канаш» çине ђăвашла куçарса çырнă терĕç, пăхха, çак нумĕрсенђе терĕç.

ИЛЛЕ. Ну? (*Хаçата пăхат*). Ку нумĕрте çук (*тепĕрне илет*). Акă пăх, пур, çак нумĕрте пур. (*Вулат, унтан савăнса калаçма тытăнат*). Астуха есĕ, мĕн ђул литтераттур тухаť. Миçе хаçат, миçе шурнал. Вуникĕ çул хушшинђе çакăн ђул çитĕнӳсем... Револђутсиђђен çаксем нимĕн пулман вĕт. Ни хаçађĕ, ни шурналĕ, ни кирлĕ кĕнекесем нимĕн те пулман.

ЕНТРИ. Мана ан кала есĕ, епĕ ес каламасан та пĕлетĕп. Претçетаттĕле есĕ пĕлмесĕрех суйланă тетни?

ИЛЛЕ. Вăл çапла пулĕ теха, савăннипе, ђун хĕпĕртенипе, ђăтаймасăр калатăп, Ентри пиђђе. Хăшпĕр ђухне пирĕн хресђенсем çакна манаççĕ. Пĕр çаксемшĕн те... вута кĕрĕн. Канашпа Шупашкар хушшинђе çилçунасем çӳреççĕ, автопуссем çӳреççĕ, çулла ђукун çул тумалла.. Вăрнарта, Çĕмĕрлĕре, Куславккара пысăк хапрăк-савăтсем... Пилĕк çулхи плана пурнăçа кĕртсен Ђăваш респуплĕкне палламалла та мар пулĕ. Ех! ăнланас пулаť çаксене!.. (*«Сунтал» тытат*). Пăхха, йепле илемлĕ кăлараççĕ, йепле хитре çыраççĕ. Виçĕмкун мĕн çывăрса кайиђђен вуларăм.

ЕНТРИ. Ман Михалђ çавсемпе ухмаха тухаť пулђ тетĕп. Хăй çеç те мар, улаха кайса хĕрсене вуласа параť. «Капкăнне» хăйпе пĕрле кĕссине ђиксе çӳрет. Аптăрамалла вĕсемпеле...

ИЛЛЕ. Хăй çырмасти вăл? Хастарлă ађа вăл санăн.

ЕНТРИ. Кунĕн-çĕрĕн ак сăвăсемпе аппаланаť. Пĕриккĕшне «Канаш» çине кĕртнĕ. Савăннипе кунĕпе лара-тăра пĕлмерĕ.

ИЛЛЕ. Ну йурĕ, каçпа вулăпăр.. Районта мĕн калаçрĕç тата? Мĕн теççĕ?

ЕНТРИ. Çак кунсенҗе сана хăна килме хушрĕç. Сана кĕтеççĕ...

ИЛЛЕ. Ыран кайас тесе тăраттăм. Пайан токлата пĕтеретĕп. Кайса килмелле пулаť. Унтан... пĕтĕм вăйпа ĕçлеме! Епĕ сана пĕлме çеç йатăм... (*Савăнса*). Тинех йĕркеллĕ пурăнма пуçлатпăр, тинех кулаксен аллинҗен хăтăлăпăр. Колхос пулаť. Сисетни есĕ çавна, пысăк ĕç пулаť, Ентри пиҗҗе!

ЕНТРИ. Туйатăп. Аван ăнлантарса паҗĕç. Çак кунсенҗе йала рапоҗҗисем килмелле терĕç... Çак ĕçре вĕсем те пулăшасшăн пире!

ИЛЛЕ. Вĕсем килсенех пуху тăвăпăр. Çĕнĕ җленсем илмелле. Тинех кулаксен хӳри хĕсĕнҗĕ... Килнĕренпе çавăншĕн çунатăп.

ЕНТРИ. Епĕ ун çинҗен шухăшламан тетним? Епĕ те сахал мар тарăхнă. Ну, киле кайса çырткаламха, çийессĕм килҗĕ. Каçхине курăпăрха.

ИЛЛЕ. Җавана та каласа кăтарт.

ЕНТРИ. Çул майĕ кĕрсе тухам. Йурĕ (*тухса кайаť*).

III.

ИЛЛЕ (*пĕҗҗен*). Халăх мĕнле тусан, ăçта аванне сисе пуçларĕ. Йал малалла хускалҗĕ, ăна никам та җарас çук... Верука кайса каласа савăнтарамха (*тумланма тытăнаť*). Ĕнер те кайаймарăм. Кайса пĕр савăнтарам.

(*Караҗăм кĕрет*)

IV.

КАРАҖĂМ. Килме йурати? Хĕнесе кăлармастăни? Халҗхи вăхăтра пĕр-пĕрин патне çӳреме те хăрушă.

ИЛЛЕ. Алăка килме тунă. Наҗар вăхăт çитрĕим сирĕншĕн?

КАРАҖĂМ. Малтанах хирĕçле ан калаçха. Епĕ санпа тавлашма мар, йĕркеллĕ калаçма килтĕм.

ИЛЛЕ. Мĕн ĕçпе? Мĕн калаçмалли пур пирĕн?

КАРАЂĂМ. Йал çыннин пĕр-пĕринпе калаçмалли пулаť вăл. Епĕ тĕрĕк çынни мартăр?

ИЛЛЕ. Тĕрĕксен те çынсем тĕрли пулаççĕ, сирĕн пеккисем те пур вĕсен, пирĕн пек ђухăнсем те нумай. Кашнинпе урăхла калаçатпăр епĕр.

КАРАЂĂМ. Ђухăнне, пуйанне пăрахха есĕ. Епĕр пуйанлăхĕ мĕн! Есĕр пиртен мĕнтен кайа пурнатăр?

ИЛЛЕ. Мăшкăлама килтĕни есĕ кунта? Кала тӳррипе!

КАРАЂĂМ. Мăшкăлама мар. Çавна çеç каласшăн. Халђ пуйанĕ те, ђухăнĕ те пĕр пек. Укçапа та нимĕн илме çук халĕ.

ИЛЛЕ. Хм. Есĕ çавна калассине епĕ малтанах сисрĕм. Тавар çук тесшĕн ĕнтĕ есĕ. Пусма тавар çук, ђей-сахăр çителĕклĕ мар, вăл çук ку çук тесшĕн. Çаплаи?

КАРАЂĂМ. Ун çинђен калаçмăпăрха епĕр. Вăт мĕскер.

ИЛЛЕ. Ну?

КАРАЂĂМ. Мĕн урлă пăхатăнха есĕ ман çине?

ИЛЛЕ. Тăрăх пăхăпăр еппин. Ну?

КАРАЂĂМ. Санпа калаçма та хăруш!

ИЛЛЕ. Ну, ну кала! Кашкăр мар епĕ. Мĕн каласшăн?

КАРАЂĂМ. Вăт мĕнле ĕç... Мм. Çитăрăв санпа калаçасшăн. Сана пулăшма хатĕр вăл.

ИЛЛЕ (*кулаť*). Ха-ха-ха, лайăхлăхпа, сана ĕнсĕнтен парса кăлариђђен тухса кай кунтан, Карађăм.

КАРАЂĂМ. Епĕ çавна çеç каласшăнђђĕ.

ИЛЛЕ. Тух тенĕ сана. Йавкаланса ан çӳре çĕлен пек.

КАРАЂĂМ. Ђипер калаç есĕ, Илле Макарђђă. Калаçмастăн пулсан кайăп (*кайаť*).

V.

ИЛЛЕ (*пĕтђђен*). Мĕн шухăшланă вĕсем. Сăнĕсене курас килмест (*тумланаť. Верук кĕрет*).

VI.

ИЛЛЕ. Епĕ сан пата пыма тумлантăм, вăхăтлă çитрĕн. Мĕн пулнă сана?! Мĕншĕн пуçна уснă есĕ?

ВЕРУК. Ан кала та, Илле. Йата йаҕĕç. Çĕркаç пирĕн хапхана тикĕтпе варланă. Урама тухма вăтанап. Мĕн тăвас, Илле, мĕн тăвас, кала? (*йĕрет*).

ИЛЛЕ (*хăрах çанни усăнса тăрат*). Т-а-а, мана çилленсе тунă кăна. Епĕ пĕлетĕп, есĕ, Верук, нихăш йенҕен те айăплă мар, ан йĕр, ҕĕрене ан çунтар. Кирек мĕн пулсан та, пире никам та уйăраймĕ пĕр-пĕринҕен. Ан йĕр (*пуçĕнтҕен сават*).

ВЕРУК (*Иллене çакăнса*). Çынсем мăшкăлаççĕ, мăшкăл, йал мăшкăлĕ. Ан пăрахсам мана, савнă Илле, ан йатла мана, епĕ нимĕн те туман.

ИЛЛЕ. Малтан йĕме ҕарăн! Есĕ мана пĕлместĕним? (*Шухăшлат*). Шан мана, Верук, епĕ пĕр сана çеç йурататăп, пирĕн тăшмансем тем хăтлансан та пире уйăраймĕç, ăнлан çавна?

ВЕРУК (*савăнса*). Ҕăн калатни, Илле?

ИЛЛЕ. Епĕ хăçан суйеçтерсе калаçнă? Та-а-а, вăт мĕскер тăват вăл ĕлĕкхи йала, вăн мĕн хăтланаççĕ йалти хуликансем. Вăл пирĕншĕн çĕнĕ йапала мар, ĕлĕкренпех тĕттĕм йалсенҕе çав йала!.. Ҕасах хăтăлас çукха ĕлĕкхи киревсĕр йăласенҕен, нумайҕҕен кĕрешмелле пулат.

ВЕРУК. Санпа ман çинҕен темĕн те пĕр калаçса çӳреççĕ тет çавăнпа сан пата килме те вăтанатăп.

ИЛЛЕ. Хăтланĕç. Хăтланмĕç теме çук. Усалсем сахал мар йалта. Пирĕн йаланах сыхă тăрас пулат.

ВЕРУК. Килмесен сана курас килет, санпа калаçса ҕĕрене пусарас килет. Çӳресен... кулаççĕ.

ИЛЛЕ. Ну во-о-о-т, епĕ сана, ытти хĕрсенҕен уйрăмрах тесе, çын сăмахне пăхмасть пулĕ, пурнăçа тĕрĕс куçпа пăхат пулĕ тесе, есĕ те... ыттисем пекех иккен. Есĕ те...

ВЕРУК. Намăс вĕт-ха, Илле, çынтан намăс...

ИЛЛЕ. Пайан манăн çав тери савăнăçђђĕ, есĕ ман кăмăла хуçрăн. Çавăн çинђен калаçасшăнђђĕ епĕ санпа, çавăнпа тумланаттăм (*тепĕр çаннине тăхăнатѣ*).

ВЕРУК. Мĕнле савăнăç, Илле?

ИЛЛЕ. Хаљ çеç Ентри пиђђе килсе карĕ, вăл района кайнăђђĕ. Хут илсе килђĕ, колхос уçма çĕр касса параç-çĕ. Лайăх çĕр памалла тунă... Çуракине машшинсем памалла тунă... Сисетни есĕ, ку мĕне пĕлтерет?..

ВЕРУК. Мана та пит савăнтаратѣ ку хыпар. Çитĕ нушалану! Епĕ те нумай кĕтнĕ кăна. Анђах хăçан туй тăвăпăр?

ИЛЛЕ. Туй... ĕçе туса пĕтерерха, ĕçлер çанăсене тавăрса, колхоса куçсан вара хĕрлĕ туй тăвăпăр. Пирĕн тăшмансем вара çăварĕсене карса пăхса тăрĕç. Вĕсенђен ан хăра. «Кĕрхи шăна хытă çыртатѣ» тенĕ ваттисем. Кĕрхи шăна хăй пĕтессине сиссе, хытă çыртатѣ, кулаксем те хăйсем пĕтессе сиссе пире йулашкинђен хытăрах çыртса йуласшăн, анђах пирĕн çул тĕрĕс, епĕр çĕнтеретпĕр. Кӳр аллуна. Çуркунне çураки иртсен, туй!

ВЕРУК. Улталамастăни, Илле? Ђăн калатни?

ИЛЛЕ (*ăна ыталаса*). Хăçан улталанă епĕ вара сана, ухмах, хăçан суйнă (*хытă тьуп тăватѣ*). Ку—ĕçе çирĕплетекен пиђет пултăр. Çакна ан ман вара..

ВЕРУК (*вĕçерĕнсе*). Кай, мĕн хăтланасшăн. Апла йурамасѣ Илле, курсан тем калĕç. Хулара вĕренсе пĕтнĕ есĕ...

ИЛЛЕ (*кулкаласа*). Вăл çынна нимле сийен те кӳмест. Есĕ мана тăшмансемпе кĕрешме вăй паратăн... Ну, вĕçтер килне, каç вăхăт пулсан пырăп.

ВЕРУК. Вăхăту пулмасан вара?

ИЛЛЕ. Вăхăт пулмасан, (*кулкаласа*) каçару ыйтатăп. Ӳлĕмрен пырăп... (*Икĕ рапотьђи, Љава, Тарас—Верук ашшĕ пырса кĕреççĕ*).

VII.

РАПОЂЂИ (*кӗрсенех*). Вӑт сана «керой»! Пӑхӑр, вӑхӑтне мӗнле иртерет вӑл. Сывӑи, Илле Макарђђӑ (*алӑ парать*).

ИЛЛЕ (*сасартӑк ҫынсем пырса кӗнипе вӑтаннӑ*). Сывӑ, хӑвӑр йепле, иртӗр, ларӑр. (*Ыттисем те алӑ тытаҫҫӗ*). Пулӑн кунта керой, кунта вӑрҫӑра мар вӗт.

ЉАВА. Кунта та вӑрҫӑринђен кайа мар, Илле. Илтрӗни вӑн, Куславкка районӗнђе, йал кулакӗсем рапођђи прикатӑна пӑшалпа тапӑннӑ теҫҫӗ. Вӑт сана вӑрҫӑ мар! Клас кӗрешӗвӗ вӑл, поҫитсири вӑрҫӑран кайа мар вӑл. Сывлӑху пури, Верук? Епӗ сана курман та (*алӑ тытать. Рапоттъипе Тарас тата Илле пӑшӑлтатса калаҫаҫҫӗ*).

ВЕРУК. Ҫӑмӑл мар пурӑнма... Ҫынсем кураймаҫҫӗ.

ЉАВА. Илтрӗм, каласа пађӗҫ... йӗрлесе тупма хушрӑм, тупсан, вӑл хуликана пуҫӗнђен савмӗҫ... (*Иллене*). Та-а-а, Ентри каласа савӑнтарђӗ мана. Ӗҫ аван пырать, шӑлӑм. Акӑ курӑн кайран, вӑтамсем те пӗтӗмӗшпех колхоса ҫырӑнма ыйтӗҫ. Халӗ те ҫырӑнас текенсем пур Ман патӑмра темиҫе сайавлени. Хӑшӗ тепӗр май шухӑшлаҫҫӗ, кулаксем хӑратнӑ. Ветенски пуп ниҫта кӗреймесӗр ҫӳрет. Илтрӗни, ђиркӳре мӗн калать тет?

ИЛЛЕ. Илтмен. Мӗн калаҫать?

ЉАВА. Ун ҫинђен кайран, халђ урӑх ӗҫ пур.

ИЛЛЕ (*рапоттъи патне пырса*). Епӗ сана паллаймарӑмҫкеха. Ӑҫтисем пултӑр?

РАПОЂЂИ. Есӗ мана паллаймастӑн пулсан, епӗ сана паллатӑп. Сан ҫинђен нумай лайӑх сӑмахсем каласа пађӗҫ мана. Кӳр аллуна, молотетс. Хӗрлӗ ҫарта вӗреннине сайа йамастӑн. (*Љавапа Тарас пӑшӑлтатса калаҫса тӑраҫҫӗ*). Епӗр сире пулӑшма килтӗмӗр. Инҫетрисем епӗр, Шупашкартан. Типокрафинђе ӗҫлетпӗр... (*Верука курса*). Йӑмӑкуи вӑл?

ИЛЛЕ. Çук, активисткă. Пĕрле ĕçлетпĕр...

РАПОЂЂИ (*шут туса пÿрнипе йунат*). Асту, пысăк ĕçе тытăннă вăхăтра хĕрсемпе ан муталан, ĕçне манса кайан.

ИЛЛЕ. Ађа мар вĕт епĕ. Хамăр ĕçе манмастпăр.

ТАРАС (*хĕрне*). Мĕн туса çÿрен кунта? Тух, кай киле!

ИЛЛЕ. Мĕншĕн хăваланха есĕ ăна, Тарас пиђђе! (*Верука аллинтђен тытса рапотђђи патне илсе пырат*). Паллашăр. Епĕр ăна трактористкă тăватпăр. Шупашкарта курс уçăлмалла тет.

ВЕРУК (*вăтанкаласа.*) Ан сÿпĕлтет, Илле. Ман пеккисем тупăнĕççке.

РАПОЂЂИ (*алă тытса*). Ну, апла пулсан пĕрле ĕçлетпĕр. (*Иллене*). Епĕр сирĕн пата акă мĕншĕн килнĕ (*Верук Љавапа калаçат*). Çитăрăвпа Карађăм патне, тата пуп патне опăскăпа каймалла, сана та илсе тухас терĕмĕр. Пыратни?

ИЛЛЕ. Хам пĕђђен ун патне опăска кайса тăваса çитнĕ ĕнтĕ. Хавассăн пыратăп.

ВЕРУК. Ман кайма вăхăт. Сывă пулăр (*кайат*).

## VIII.

ИЛЛЕ. Пилĕкçĕр пăт ытла тырă усрат? пусма тавар пит нумай теççĕ, хам тĕплĕн пĕлейместĕп. Йала çавăрса илме тытăннă. Ђухăнсен тирне сĕвет.

РАПОЂЂИ. Сирĕн йалта миçе лишшентсă?

ЉАВА. Тăххăрăн. Тăххăрăш те çав тери кутăнсем. Пĕри ĕлĕк страшнĕкре тăнă.

РАПОЂЂИ. Йапалисем ăçташи, ăçта пытарнине пĕлетри?

ИЛЛЕ. Таçта мур шăтăкне пытараймĕç, шырасан тупăпăр. Тырри итемре теççĕ. Арпалăха çĕр алтса пытарнă тет.

РАПОЂЂИ. Сирӗн йала тата икӗ рапоҙҙи килмелле. Вӗсем ернерен килеҫҫӗ. Кулаксене пӗтӗмӗшпех пӗтерме · сӗр ђарӑнмастпӑр. Рапоҙҙисем сире кирек хӑҫан та пулӑшма хатӗр. (*Ентри васкаса кӗрет*).

IX.

ЕНТРИ. Кӗттерсе ывӑнтартӑм пулас. (*Хӗрарӑмсем пуп умне пухӑннӑ та темӗскер шавлаҫҫӗ*). Такам шуйттанӗ суйа сӑмах сарнӑ. Рапоҙҙисем пупа арӗслеме килнӗ тесе шавлаҫҫӗ.

РАПОЂЂИ. Хӑтланђђӑр ӗнтӗ, кайран ӑнланӗҫха. Сирӗн турӑсӑрсем нађар ӗҫлеҫҫӗ пулас. Епӗр пӗр йалта пултӑмӑр, унта хӗрарӑмсем те пит активлӑ ӗҫлеҫҫӗ.

ЉАВА. Ђиркӳре хайне пулӑшма ђӗннӗ терӗҫ. Хӗрарӑмсем тӗн сӗрӗмӗнђен хӑтӑлайманнине пӗлет вӑл. Ђерет ҫитӗха ӑна та. Ну карӑмӑр. Малтан Ҫитӑрӑв патне кайар. (*Пӗр-пӗринпе калаҫса тухса кайаҫҫӗ*).

X.

КЛАВЙЕ (*витрепе шыв йӑтса кӗрет*). Ӑҫта мура ку тери васкаса карӗҫ вӗсем. Ђӗнсе те ђӗнмерӗҫ. (*Ђӳретђерен*). Ђас килетни есӗ, Илле? Апат пиҫнӗ, апат ҫимелле пулаҭ.

ИЛЛЕ (*сасси*). Ђас килеймӗп, мана кӗтсе ан тӑр, антарса ҫи. Ӗҫ пур.

КЛАВЙЕ. Йалан ӗҫ пур. Килнӗренпе лара-тӑра пӗлмест. Вутра ҫунаҭ. Ӗҫ хӑҫан пӗтет вӑл? Спаҫҫипӑ илтес пек. Хайне вӑрҫаҫҫӗ. Е-х, темӗскер пулђӗ ывлӑма. Авланса йарасђӗ те пурнасђӗ. Ӗне пур, лаша ҫеҫ кирлӗ. Ахванеҫ хӗрне илсен авантарах та ман шутпа, унӑн пурлӑхӗ нумай теҫҫӗ. Верукӑн пурлӑх ҫук. Хай вӑл аван та... Тулли витрене хирӗҫ пулђӗҫ, ӗҫӗ ӑнӑҫлӑ пулӗ. Хӗнесе амантӗҫха. Калап та ђарӑнмаст вӗг. Итлемест ман сӑмаха!

XI

(*4—5 хĕрарăм кăшкăрса пырса кĕреççĕ. „Çавсем Ђавапа иккĕш йалă пăтратаççĕ, вĕсене шăлĕсене пĕçертмелле“*).

ПĔРИ. Ăçта мура кайнăха вăл? Тарса пытанним тата?

ТЕПРИ (*Клавйене*). Ăçта пытартăн путсĕр ађуна?

ВИÇÇĔМĔШ. Çавсем ђиркўве хуптарасшăн, пўпа тытса кайасшăн. Намăссăрсем.

ПУРТЕ. Аранђă турăран хăрас пулаť, çылăха пĕлес пулаť. И-и-их, ку ђухнехи çамрăка! Ăçта кайнă вăл?

КЛАВЙЕ. Мĕн кăшкăратăрха есĕр? Ăçта кайассине мана каласа каймасť вăл. Унăн хăй ĕçĕ хăйне çитнĕ.

ПУРТЕ. Ха, ывăлĕ хутне кĕрет, астăвăрха есĕр ăна! Вăл та вĕсен майлă пулас? Çавăрса илсе тўпкемелле пит лайăх кăна, ывăлĕ вырăнне.

КЛАВЙЕ (*хытă кăшкăрса*). Есĕр мана мăшкăл тума килни мĕн? Хам килте хама хĕнесе хăварасшăни мĕн? Кам ирĕк пађĕ сире, мĕн хăтланса çўретĕр? Тухăр кунтан, капла калаçсан, тухăр!

ПĔРИ. Астуха, йепле хайарланнă вăл. Ђар ађуна!

КЛАВЙЕ. Хăв килсе ђар!

ТЕПРИ. Сан ывăлу вăл. Ђарусăрскер, пире ђиркўсĕр, пупсăр хăварасшăн. Ймĕтсĕр.

ПУРТЕ. Кулма ирĕк памастпăр. Пупа вĕсен аллине памастпăр. Хăйĕн пурлăхĕ çук та, çынсенне ăмсанса çўрет. Пĕрлешмее-е-е кирлĕ, колхо-о-ос уçас тет, манка сурăх. Кăтартмалла ăна колхос. (*Павăл Ваççилђђă—утђђитлĕ пырса кĕрет*).

XII.

ПАВĂЛ ВАÇИЛЂЂĂ. Мĕн çĕмĕрлетĕр есĕр кунта? Мĕн пулнă сире? (*Клавйене*). Илле Макарђă ăçта кайнă?

ХĔРАРĂМСЕМ. Епĕр те çавна шырама килтĕмĕр. Пиђĕ çине сурас йапала. Намăссăр.

ПАВӐЛ ВАҪҪИЛӖҪӖ (*ҫиленерех*). Ҫаранӑрха, ан кӗрлӗр, Клавйе ичкене калаҫма парӑр. Ӑҫта кайрӗ Илле Макарҫҫӑ, мӗн ӗҫпе? (*Хӗрарӑмсем пӗр-пӗрипе пӑшӑлтатса калаҫаҫҫӗ*).

КЛАВЙЕ. Хам та аптранӑ ӗнтӗ унпала, Павӑл Ваҫҫилҫҫӑ. Ун пирки мӗн ҫул сӑмах илтнӗ. Таҫта, нумай нулмасӑ тухса карӗҫ. Палламан ҫынсем те нурҫҫӗ. Ыйтрӑм та аллине ҫеҫ сулҫӗ. Ҫас ан кӗт терӗ.

ПАВ. ВАҪҪИЛӖҪӖ. А-а-а-а, ҫавӑнта кайнӑ пулӗ. (*Хӗрарӑмсене*). Ну, сире мӗн кирлӗ пулҫӗ? Мӗн тӗпӗртететӗр?

ПУРТЕ. Ҫиркӗве хуптарасшӑн, пупа хулана илсе каймалла теҫҫӗ. Вӑт тӑшман!

ПАВӐЛ ВАҪҪИЛӖҪӖ. Пӗлмесӗр ан сӳпӗлтетӗр! Кам каларӗ сире?

ПУРТЕ. Паҫӑшкӑ хӑй каларӗ. Вӑл суйас ҫук!

ПАВӐЛ ВАҪҪИЛӖҪӖ. Пупран ытла кам суйаканни? Хӑҫантанпа суйса улталаса пурӑнаӑ сире! Кирлӗ пулсан ҫиркӳне те хупӑпӑр, пупне те ӑса кӗртӗпӗр. Анҫах халҫ ҫерет ҫитменха. Опӑскӑ мӗн кӑтартӗ.

ПУРТЕ. Есӗ те вӗсен майлӑ. Сана та кирлӗ. Вӑт сана уҫҫитлӗ. Пӑхӑрха, м н калаҫаӑ.

ПАВӐЛ ВАҪҪИЛӖҪӖ. Епӗ тӗрӗслӗх майлӑ. Ҫимӗрха, ҫимӗр, ан шавлӑр. Пӗлмесӗр калаҫмаҫҫӗ ӑна.

ПӖРИ. Есӗ пӗлен, вӗреннӗ ҫын вӗт есӗ.

ТЕПРИ. Епӗр тӗттӗм.

ПАВӐЛ ВАҪҪИЛӖҪӖ. Тӗттӗм ҫав. Ҫав хуплаӑ сире. Сирӗн пуҫра тӑн йулман. Кӑштах тӑн йулнӑ пулсан капла хӑтланмастӑр есӗр. Тӗн сӗрӗмӗ хупласа илнӗ сирӗн пуҫа.

ПУРТЕ. Астуха, куҫ кӗрет мӑшкӑлатиҫ?

ПАВӐЛ ВАҪҪИЛӖҪӖ. Мӑшкӑласа мар. Кашни ҫын хӑйшӗн огвет тытаӑ. Пуп та пирӗн пек ҫынах, анҫах шухӑшӗпе ӗҫӗ пирӗн пек мар.

ПĔРИ. Сан пек турăсăр мар вă л.

ПАВĂЛ ВАÇÇИЛЂЂĂ. Ан тив, вăл турăллă пултăр. Икçĕр метр таранђђен саттин турăшăн хатĕрленĕ тийĕпĕр. Çапла пултăр, анђах ăна та ытлашши калаçма хушмаççĕ. Мĕн каласа хăратрĕ вăл сире? Тĕнђе пĕтет тети?

ПĔРИ. Есĕр капла хăтлансан пĕтĕ те çав. Есĕ те. Илле майлă...

ПАВĂЛ ВАÇÇИЛЂЂĂ. Илле тĕрĕслĕхшĕн тăрăшаť Ђухăнсем те йĕркеллĕ, çителĕклĕ пурăнасшăн, анђах йал пуйанĕсем пурăнма памаççĕ.

ПĔРИ. Пурăнгăр, кам ђараť ăна. Ђаракан çук.

ПАВĂЛ ВАÇÇИЛЂЂĂ. Камшăн тăрăшаť сирĕн пуп? Кулаксем майлă ĕçлет. Колхос уçма ђараť. Хресђенсен ĕнси çинђе тата нумай пурăнасшăн. Çитĕ, малашне пурăнаймĕ. Пупсем улталанине нумайĕшĕ сисрĕç, есĕр анђах хăвăр тĕттĕм пирки, ăнланса илейместĕр. Куçа уçас пулаť. Лайăх пурнăçа турă памасť, ăна тума тăрăшас пулаť. Илле çавăншăн тăрăшаť. Мархвана илер, паллах, сана колхос кирлĕ мар, ђухăнсен çĕрĕсене тара илсе акса пуйрăр. Çĕнĕ пурнăç тăвас пулаť.

ПĔРИ. Есĕр тăвăр ĕнтĕ Иллепе.

ПАВĂЛ ВАÇÇИЛЂЂĂ. Тăвăпăр, тăрăшсан тума пулаť. Епĕр иккĕн çеç мар, пĕтĕм ђухăн халăх пирĕнпе, вăтам хресђенсем те пирĕнпе. Есĕр, пуйан арăмсем, пирĕн ĕçе ђаратăр. Пуп сăмахĕ хыççăн кайатăр. Ну ман каймалла. Сывă пулăр, ĕç пур. (*Клавйене*). Сывă пул, ђипер йул, инке.

КЛАВЙЕ. Тепре килсе лар.

ПАВĂЛ ВАÇÇИЛЂЂĂ. Хăш ђухне килме вăхăтăм пулмасť. Пушă вăхăтра килетĕп. (*Алă тытса*). Кўр аллуна, ăслă ађа ўсгернĕшĕн. Ђипер йул (*тухса кайаť*)

КЛАВЙЕ. Ăсатса йарамха (*тухаť*).

XIII.

ХЁРАРАМСЕМ. Уђђитлĕ те вĕсен майлă. Пурте пĕр сăмахран. Хăтланђђăр ĕнтĕ, курăпăр. Пупа хулана илсе кайма памастпăр. Айтăр, кайар.

(*Клавйе вĕсене хирĕç кĕрет*).

XIV.

КЛАВЙЕ. Илтрĕри, уђђитлĕ мĕн калать.

ПЁРИ. Илтрĕмĕр, илтрĕмĕр. Пит аван калаçать. Ђĕлхинђен çакса хураскер. Вĕреннĕ калаçма.

(*Тухса кайаççĕ*).

XV.

КЛАВЙЕ (*пĕтђтђен*). Тем курса тăрăн ку Иллепе. Мĕне курса вăл тери тăрăшатши ĕнтĕ? Хĕнесе амантĕçи. Авланасђĕ те пурнасђĕ. Епĕр ĕлĕк пĕрлешмесĕрех пурăннă. Çапса пăрахасран хăратăп. Усал çынсемпе хирĕçет... Йепле пулсан та хăвăн ывăлу çав, шел.

(*Тиххăн кĕрет*).

XVI.

ТИХХĂН (*ĕхĕлтетсе кĕрет*). Сăра пури санăн, Клавйе инке? Сăра ĕçес килет.

КЛАВЙЕ (*çиленсе*). Сирĕн сăра нумай пулĕ, есĕр пуйан вĕт. Пирĕн ђухăнăн сăра пулмасть. Мĕн ĕçпе килтĕн?

ТИХХĂН. Ахалех. Пирĕн кĕске пăшал пур. Их-их-ик. Епĕ те пеме пĕлетĕп. Сăра ĕçес килет. Униçĕм илсе ĕçтереп тет. Укçи пур унăн.

КЛАВЙЕ. Мĕн ухмахланатăн есĕ? Мĕнле ĕçкĕ çинђен калаçатăн? Тух кунтан!

ТИХХĂН (*ĕхĕлтетет*). Ихи-хик. Верук хапхине варалаnăшăн ĕçтереп терĕ.

КЛАВЙЕ. Камăнне? Хăçан? Кам вараларĕ?

ТИХХĂН. Каласан мана хĕнет вăл. Ихи-хи-ихик. Пĕлетĕп те, каламастăп. Сăра парха!

КЛАВЙЕ. Калаха есĕ, мана каласа пар, епĕ никама та каламастăп. Сăра парап вара.

ТИХХĂН. Ђăнахи?

КЛАВЙЕ. Ђăнах, ђăнах.

ТИХХĂН. Никама та ан кала, асту (*кулкалат*). Мана вăл пĕр савăт ăшне тикĕт тултарса пађĕ. Веруксен хапхине кайса сĕр, терĕ. Сăра илсе пама пулђĕ. Епĕ вара çĕрле пит лайăх сĕртĕм.

КЛАВЙЕ. Ах, минкĕрев сурăх. Кай кунтан, кай. Ак сана (*тапса сиктерет*).

*Ђаршав*

## ВИÇÇĔМĔШ ПАЙĔ.

Хресђен пÿрђĕ. Сулахай йенђе пÿлĕм, унта вăрласа килнĕ Верукпа Еттÿçа хупнă. Стсенă çинђе килхуçи Трахвин, унăн арăмĕ. Хĕр вăрласа килнĕ лавçă Еттÿçăн уйăрăлнă пиђђĕшĕ Елекçей. Алăк патĕнђе çамрăксем хĕрсем, кађђăсем хĕвĕшеççĕ.

### I.

МАРХВА (*килхуçи арăмĕ, Елекçейе*). Систермеллеђђĕ сирĕн малтан. Хатĕрленнĕ пулăттăмăр. Хаљ ним тума апгăрарăмăр.

ЕЛЕКÇЕЙ. Мĕн аптрамалли пур унта? Ĕçетпĕр, ташлатпăр, хĕртен арăм тăватпăр та, ĕçĕ те пулђĕ.

МАРХВА. Кайран калаçăпăр, кирлисене хатĕрлемха епĕ. Тарас хĕрĕ тетĕриха? Мĕнле Тарас вăл, пĕлейместĕпçке?

ТРАХВИН. Есĕ, матка, ху ĕçне пĕл. Хатĕрлемеллине хатĕрле. (*Елекçейе*). Ирĕксĕртерех лартса килтĕрим? Хĕрĕ ытла çухăрат. Малтан калаçса çавăрмаллађђĕ.

(*Мархва тухса кайат*).

II.

ЕЛЕКÇЕЙ. Çавăрăнмасан мĕн тăвăн ăна. Каймастăп тет. Еттӳç çав тери йуратать ăна. Малтан йуратмасан кайран аван йуратаççĕ. Ниҕҕаваааа, ҕарăнĕха. Лăпланĕ-ĕ-ĕ, вăхăҕĕ çитсен. Епĕ хам арăма вăрласа илнĕ. Пурăнатпăр пĕрмай.

ТРАХВИН. Ёлĕк çапла пулнă та, хаљ пит строкă уншăн. Тем курса тăрăн сирĕнпеле. Хаљ самани урăх. Хĕрĕ пит хитре çав. Анҕах çапах ирĕксĕр вăрлама хушмаççĕ.

ЕЛЕКÇЕЙ. Есĕ, хăта, саманине мĕнне тишкĕрсе ан тăрха. Рас туй килнĕ, туй пултăр. Йевҕе ĕçтерес пулать. Çул çинҕен килнĕ çынна ĕçтереççĕ. Йе епĕр килнĕшĕн хавас мари есĕ? Хаљ калла тума çук ĕнтĕ. Çиҕĕ çухрăма ахаллен лаша тарлатса килмен. Аҕа ваййи выљамастпăр.

ТРАХВИН. Ес сасартăк ан çиленха, Елекçей шăллăм. Унтан ĕç ҕарăнмĕ. Анҕах хĕрĕ пит çухăрать. Вăн куратни. Алăка çĕмĕрес пек шаккать.

ЕЛЕКÇЕЙ. Ҕарăнĕха хăйех. Ну, килтĕмĕр те хамăр та. Шуйттан та хăваласа çитес çук. Çил пек вĕçтеретпĕр, Иллен савни вĕт, Макар Иллине пĕлетни, нумай пулмасть Хĕрлĕ çартан таврăнҕĕ. Вăт ăна шĕвĕртсе хăвартăмăр.

(*Тиххăн кĕрет*).

III.

ЕЛЕКÇЕЙ (*Тиххăна*). Лашасене лайăх кăкартăни?

ТИХХĂН (*ĕхĕлтетсе кулать*). Кăкартăм. Кĕренни ҕут çеç пуçран çыртса илетҕĕ. Хăйĕнҕен тар йухса тăрать.

ЕЛЕКÇЕЙ. Ун пек хăваласан тарлăн. Çиҕĕ çухрăма пĕрре ҕарман вĕт, тăваттăн ларнă. Çул йăвăр. Тарлăн.

ТРАХВИН. Кăна ма лартса килтĕр?

ЕЛЕКÇЕЙ. Таçтан ăсĕ çитнĕ мурăн. Хĕре йăтса пăрахнă вăхăтра епĕ ăна лашасене тытса тăма хушрăм. Кайран

йалтан инçе кайсан çавранса пăхатăп та курах кайрăм. Çуна хыçне çакăннă та ĕхĕлтетсе пыраť. Çапса сирпĕтсе хăварсан—скантал пулĕ терĕм. Çул çинђе шăнса вилесрен хăрушă. Тата унпала ђăрманса тăма вăхăт та çук. Так, ларса килђĕ вара. Туйра пĕр интерес пултăр. Камит пек вăл. (*Тиххăна*). Ну, туйра ташлатпăри.

ТИХХĂН. Ташлатпăр. Анђах малтан ăшăнмалли сыпас пулаť. Сивĕ пулђĕ (*аллисене вĕрет*).

ЕЛЕКÇЕЙ. Куратни? Йепле калаçаť вăл?

ТРАХВИН. Мĕн ташлаттарнине аван пĕлет ађи, сăмсине шăлаймасť пулсан та. Ха-ха-ха, хо-хо-хо, сăмсу айне шăл.

ЕЛЕКÇЕЙ. Ах хирти тăмана. Йепле калаçаť вăл. Ха-ха-ха. Есĕ хăçан авлананха.

ТИХХĂН. Атте авлантарсан—авланап. Ихихик. Атте авлантармасť.

ЕЛЕКÇЕЙ. Аçу авлантарасса кĕтсен. Пĕрне вăрлата кай.

ТИХХĂН. Верука хам вăрласшăнђђĕ те... кайа йултăм: малалла çаклансан!

ТРАХВИН. Астуха есĕ ăна. Мĕн калаçаť вăл. (*Кулаççĕ*). Калаçма вĕреннĕ.

ТИХХĂН. Верук çул çинђе «каймастăп» тесе йĕрет. Ухмахскер. Пуйан çын ађи илнĕшĕн савăнмалла, вăл макăраť. Ихи-хик. «Çакăнса вилеп, пурпĕрех сана каймастăп» тет. Еттӳç пусса выртнă та йамасť ниçта та. Хи-хи-хик.

ТРАХВИН. Пуссах выртнăи? Ну? Ой, култарса вĕлерен. Ха ха-ха-ха, хо-хо-хо. Ну ăшăт аллусене кăмака çумĕнђе. Епĕ пĕр çĕре кайса килемха (*тухса кайат*).

## IV.

ЕЛЕКÇЕЙ. Ыглашши ан калаç есĕ, кайнă ђухне çăварна çапса çурăп. Илсе килнĕ сана туйа, спаççипă кала.

ТИХХĂН. Епĕ мĕн курнине çеç калатăп. Ма çилененха есĕ мана.

ЕЛЕКÇЕЙ. Кăтартăп сана çиленен. Йала таврăнсан шăп пул. Ни-ни. (*Мархва кĕрет*).

V.

МАРХВА. Кунăссă килеп терĕ. Картишĕнђе çамрăксем тулнă. Ашкăнаççĕ, кулаççĕ. Вĕсене савăнăç пултăр. (*Сĕтел çине витет*). Еттӳça епĕ хамăр йалтан, пуйан Мĕтри хĕрне тупасшăнђђĕ. Темме йуратмарĕ ăна. Пурлăхĕ пур, ĕçлеме пултарать. Хĕрĕн те кайма шухăшĕ пурђђĕ. Ну, йурĕ ĕнтĕ, пĕр вăрласа килнĕскере калла тăваймастăн. Анђах хĕрĕ çавăрăнмасть. Йевкене те йарса калаçтартăм та, çук, йахăна та килмест тет.

ЕЛЕКÇЕЙ. Тиххăн вăн ăшăнасшăн, пит шăнтăм тет. Сирĕн пури вăл. (*Хветке кĕрет*).

ХВЕТКЕ. Йалĕпе хĕре ирĕксĕр вăрласа килнĕ тесе шавлаççĕ. Калар тĕрĕссипе, хĕрĕ хăй кăмăлĕпе килнĕи, йе иксĕр вăрласа килтĕри? Мĕн шăла йĕрсе ларатăн?

ЕЛЕКÇЕЙ. Есĕ мĕнле çын? Кам йаđĕ сана кунта? Кăмиссари есĕ? Сашђитнĕк тупăннă. Санăн мĕн ĕçу пур унта?

ХВЕТКЕ. Калăр тенĕ сире: ирĕксĕр вăрларăри? Хĕрĕ ăçта? Куншăн мĕн пуласса пĕлетри? Ăçта пытартăр хĕре, ђорт воçмисем.

ЕЛЕКÇЕЙ. Кам есĕ? Кам ђĕнсе килђĕ сана кунта? Санăн мĕн ĕçу пур кунта, çавна калаха есĕ мана!

ХВЕТКЕ. Ĕç пулмасан килмеççĕ. Мана йалти комсомол йаđейкки хушса йаđĕ.

ЕЛЕКÇЕЙ. Комсомо-о-о-л, ку ĕçре те комсомол, пухура комсомол, колхосра та комсомол, ĕçкĕре те комсомол, кунта та комсомол, сывлама паратри есĕр пире, çуки?

ХВЕТКЕ. Сан шутпа пĕтĕм пурнăçа комсомол пăсать,

пирĕн шутпа, тĕнҫене сан пек йурăхсăрсем, сирĕн пек усалсем пăсаççĕ...

ЕЛЕКÇЕЙ. Сăптăрса йарăп акă питĕ лайăх кăна, тĕнҫене кам пăснине курăн вара çавăн ҫухне. Тух кунтан шăммуна ислетиҫҫен!

ХВЕТКЕ. Ан кăшкăраш, хур аçи пек ан сиккеле. Питех хăрамаççĕ. (*Çамрăксене*). Саккун ун пек хушмасť. Пăхăр ĕнтĕ, йулташсем, пăхăр, кулаксем мĕн хăтланаççĕ. Вăрманта пурнакан тискер çынсем пек, çутă кун хушшинҫе çын вăрлатăр. Шыври шуйттансем! Çăлас пулаť хĕре! Пусмăрлама парас мар. (*Алăка, пӳлĕм алăкне шаккани илтĕнет*). Авă ăçта питĕрсе илнĕ вĕсем. (*Алăк патнелле пырса*). Хăтарас пулаť хĕре.

ÇАМРĂКСЕМ (*харăс*). Хăтарас, çăлас. Ирĕксĕр вăрлама йурамасť! Саккун хушмасť апла хăтланма.

ПĔРИ. Вăл хăй ирĕкĕпе килнĕи тен? Хĕрсем пурте çапла вĕсем.

ХВЕТКЕ (*аллине сулса*). Супĕлтетсе ан тăр кунта.

ЕЛЕКÇЕЙ. Сăптăрса йарăп та, курăр вара саккун (*хапха питĕркĕç тытаť*). Тухăр кунтан, атту пуçусене çапса çĕмĕрĕп. Ну?

ХВЕТКЕ. Çапаймăн... Айтăр совета кайса калар, йулташсем. Вĕрентес пулаť вĕсене. (*Елекçейе*). Ĕнсуне хыçăнха кайран. (*Тухса кайаççĕ*).

## VI.

ЕЛЕКÇЕЙ. Хуп çăварна, йавăл. Санăн ĕçу çук унта. (*Сĕтел патнелле пырса*). Йепле усала кайса пĕтнĕ вĕсем? Ирĕк илнĕ. Хăратма хăтланаççĕ. Тиххăн шăнтăм тет, ăшăтмалли çуки? (*Тиххăна*). Çаплаи, Тиххăн?

ТИХХĂН (*кулкаласа*). Вăл аван пулĕҫҫĕ те. Епĕ çавăнпа килтĕм те.

МАРХВА. Хăвăр айăплă. Систермелле пулнă малтан. Паçăрах каларăмçке. Хатĕрлемен епĕр. Трахвин çавăнпа кайнă пулĕха. Епĕ сăра тупрăм. Ăшăтма лартрăм. Сивĕ сăра ўсĕртгерет вăл. Апат хыпкалăрха малтан. Çикелĕр, хырăмăр выçрĕ пулĕ. Ларăр.

(*Пўлĕмрен Йевкен тухаť*).

## VII.

ЕЛЕКÇЕЙ. Ну мĕнле, лăпланђĕи? Ĕç ăнати?

ЙЕВКЕН. Йахăна та килмест. Епĕ темĕн ђул ўкĕтлерĕм. Еттўç хăратса та пăхаť,—çук. Йахăна та килмест. Хыçĕнђен хăваласа килес пулсан, пĕтерееççĕ пире. Анђах пайан ашшĕ кўршĕ йала кайнă терĕ.

ЕЛЕКÇЕЙ. Мархва тăхлађ, есĕ кайса калаçса пăхха. Есĕ ватă çын, сана итлеми!

МАРХВА. Е-е-й, кăмăлĕ çаврăнĕха, Еттўç нађар кађђă мар вĕт вăл. Ман хатĕрлемелле кунта. Алă çаврăнсан кайса пăхăпха (*тухса кайаť*).

## VIII.

ЕЛЕКÇЕЙ. Йату кайаť тесе хăратмаллађђĕ ăна. Авантарах калаçтар. Пурпĕр йату кайаť. Кайран сана никам та кађђа илмест те. Пултараймастăн есĕ те.

ЙЕВКЕН. Çаврăнмасан мĕн тăвăнха ăна? Кăсем те тата мĕшĕлтетееççĕ. Ни хатĕрлесе çитереймеççĕ. Иккĕш те таçта тухса кайрĕç.

ЕЛЕКÇЕЙ. Куншăн пĕрре çул çинђе курсан тытса хĕртес пулаť теха ăна. Вĕсем çав тери хыт çын тенине илтнĕђђĕ те, Еттўç çакăнта килес терĕ. Вăт хурăнташ те вĕсене! (*Мархва хăпарту илсе кĕрет*).

МАРХВА. Ларăр сĕтел хушшине. (*Верук пўлĕм алăкне шаккаť*). Астуха есĕ ăна, йепле çаврăнман хĕр пулаť иккен. Ну ларăр. Лар, Йевкен, Елекçей хăта, Тиххăн.

ЕЛЕКÇЕЙ. Çикелĕрха еппин. Васкарах ĕçлĕр, тăхлаҕ, туйне тăвас та кайас.

МАРХВА. Травин илме кайнă, илсе килĕ акă. (*Ларасçĕ*).

ТИХХĂН. Вăт сана туй.

ЙЕВКЕН. Мĕн çитмерĕ тата сана?

ТИХХĂН (*ĕхĕлтетсе*). Туй çапла пулати? Ни ĕçки, ни ташши!

ЕЛЕКÇЕЙ. Ĕлкĕрĕн. Антăхса ан лар. Тĕнҕене ан култар.

МАРХВА (*Елекçейе*). Ну, çийĕрха есĕр. Мĕнле сирĕн йалта та çав колхос тенине тăваççи? Пире кунта тĕнкене илҕĕç. Пĕтереççĕ.

ЙЕВКЕН. Ан калаç та ĕнтĕ ун çинҕен, Мархва тăхлаҕ. Çарамас хăварасшĕн. Пирĕн йапаласене илсе кайсассăн аннепе ик-виç кун йĕтĕмĕр.

МАРХВА. Апла сирĕн те çавах? Пĕтереççĕ кунта та. Колхос тăвас теççĕ.

ЕЛЕКÇЕЙ. Пирĕн йалта çак хĕрĕн савнийĕ пĕтерет пире. Çав пăлхататă халăха. Епĕ çавăнпах та ун савнине вăрлама хам лашасене шеллемерĕм.

МАРХВА. Еппин çапла кирлĕ ăна. Пирĕн те кунта çавăн пек виç-тăват çын халăха пăтратаççĕ. Пĕрне нумай пулмасă тытса ватнă терĕ те, çук, вĕсем хăйсеннех. Çылăха та пĕлмеççĕ. (*Çамрăксем кĕреççĕ*).

## IX.

ПĔРИ. Туй пулати сирĕн? Кĕтсе ывăнтăмăр. Шăнса пĕтрĕм (*пĕр-пĕринпе каласа кулаççĕ*).

МАРХВА. Мĕн кирлĕ пайан сире?.. Пуçланĕха вăхăт çитсен, ан васкăр, пуçланĕ.

ТЕПРИ. Мĕн кĕтмелли пур тата? Ҕўк тумаллаим?

МАРХВА. Кĕнĕ пулсан... мăшкăлама йурамасă ват çынна. Хăçан пуçласси сирĕн ĕç çук унта. (*Çамрăксем*

*ахăлтатса кулаççĕ. Хăнисене*). Çийĕрха есĕр, çийĕр. Апла сирĕн йалта та пуйансене çаратаççĕ иккен. Аптăрарăмăр ĕнтĕ епĕр. Ђухăнсен нимĕн çуккипе епĕр айăплă мар та, темне курса тăрăнђĕç çав тери.

ЕЛЕКÇЕЙ. Влаçĕ çаплалла, çав хушаť. Найансемшĕн ырлăх.

ЙЕВКЕН. Пирĕнне хамăра илсе хунă пусмасене, тырра тийесе тухса карĕç. Выçă тăратса хăварасшăн.

ЕЛЕКÇЕЙ. Ну, кунта ун çинђен калаçма килмен епĕр. Мĕншĕн килнине хăвăр та пĕлетĕр. Мур çитĕр. Мĕн тăвас тетĕн, ђăтас пулаť. Хуçа таçта кайса çухалђĕха, çав мана тĕлĕнтерет.

МАРХВА. Ерех шырама кайап терĕ. Хађ ăна та тупма хĕн.

ЕЛЕКÇЕЙ. Халђђен таçта, хулана çитсе килмелле. Пирĕн калла каймалла пулаť пулĕçке. Туйне килте тăватпăр пулĕ, кунта ĕç тухас çук.

МАРХВА. Ак тамаша тата, апла йураťи вăл? Килнĕ тĕк туйĕ кунта пулаť ĕнтĕ вăл. Апла йурамасť! Килет пулĕ ĕнтĕ ватти те. Апла йурати.

ЕЛЕКÇЕЙ. Капла пуçа тăратса ларни те йурамасť. (*Çамрăксем ахăлтатса кулаççĕ*).

МАРХВА. Çи есĕ, Йевкен, çи, тыт. Тиххăн, есĕ те çи. (*Тиххăн апат нихăçан курман пек çийет*).

ТИХХĂН (*кулкаласа*). Пит çийес килђĕ. (*Йевкен ăна айаккинђен ђышаť*). Мĕн ђышса ларан есĕ мана. (*Çамрăксем пĕр-пĕрипне пăшăлтатса кулаççĕ*).

МАРХВА. Çĕн йалта пĕри çапла вăрласа килнĕ те, пĕр çуллăха хупса лартнă тет. Есĕр йепле хăраман тата?

ЕЛЕКÇЕЙ. Унтан та хăраса тăрсан тĕнђере. Çилле тавăрас терĕм Иллене. Анђах Еттўç нађар хăтланаť, епĕ пулсан тавну çавăрнă хĕре. (*Тиххăна*). Есĕ пулăшма кĕместни? Кĕр, мĕн кулкалан?

ТИХХĂН. Епĕ кĕрсен наҫҫас ҫавăратăп.

ЕЛЕКҪЕЙ. Калаҫма таҫтан вĕреннĕ єсĕ. Хе-хе-хе. Сăмахпа тем тăвăн.

МАРХВА. Ҫийĕр есĕр, урăх нимĕн те ҫук. Акă Трахвин илсе килĕ. (*Трахвин кĕрет*).

X.

МАРХВА (*Трахвин кĕрсен*). Акă ҫитрĕ хайхи. Ăҫта есĕ хăнасене пăрахса ҫӳретĕн? Кайрăн та ҫухалтăн веҫех.

ТРАХВИН. Йалĕпе ерех шырарăм, ниҫта та ҫук. Ваҫккана кӳршĕ йала йатăм. Тупса килейи. Ку ҫуннă саманипе, туйне те тăваймăн ĕретлĕ (*сĕтел хушшине ларат*).

ЕЛЕКҪЕЙ. Ниушели ниҫта та ҫук? Ытти йалсенҫе пулаканҫҫĕ. Йепле ҫук вăл?

ТРАХВИН. Пирĕн те пулаканҫҫĕ те, нумай пулмасť милитси килсе карĕ, ҫавă хăратрĕ. Вăт ҫавăнпа йухтарма хăраҫҫĕ. (*Ҫамрăксем йенне ҫаврăнса*). Есĕр пĕлместĕри, камăн ерех пур?

ПĔР ҪАМРĂК. Уксак Михаҫан пур тетҫĕҫ.

ТРАХВИН (*аллине сулса*). Пытăм, унта та ҫук тет.

(*Ҫамрăксем хăшĕ кĕреҫҫĕ, хăшĕ тухаҫҫĕ*).

XI.

ТРАХВИН. Хĕрĕ мĕнле? Ҫаврăнати? Кăшкăрашма пăрахрĕи?

ЕЛЕКҪЕЙ. Вăл пирĕн ĕҫ мар ĕнтĕ. Иккĕш хут те мĕн хăтланҫҫăр. (*Пӳлĕм алăкне хытă шаккаҫҫĕ*). Ҫук, ҫаврăнман пулас. Йепле кĕмсĕртеттерет.

ТРАХВИН (*арăмне*). Кус, кайса ӳкĕтлеха. Ватă ҫынна итлети тен.

МАРХВА. Кайамха еппин. Калаҫтарса пăхам.

ЙЕВКЕН. Епĕ те пырап. Иккĕн калаҫтарăпăр.

(*Пӳлĕме шаккаҫҫĕ, унтан кĕрсе кайаҫҫĕ*).

XII.

ТРАХВИН. Вăт мĕнле хайар хĕр пулаŤ иккен. Астуха есĕ ăна. Е? Нимпе çаврăнмасŤ. Мĕн тăвас пулаŤ унпала?

ЕЛЕКÇЕЙ. Ним тума та аптăрамалла.

(*Пĕр аҫа ҫупса кĕрет*).

XIII.

АҪА. Милитси килнĕ, Трахвин пиҫҫе! Карташне кĕҫĕç. Лашапа!

ТРАХВИН (*хăранипе сиксе тăраŤ*). Суймастăни есĕ? Ҫăн калатни?

АҪА. Çĕр çăттăр ваттăк. Турăшăн.

ЕЛЕКÇЕЙ (*тĕлĕнсе*). Ну-у-у! Ниушлĕ милитси?

ТРАХВИН. Каларăм вĕт. Ех, хăтланмалла марҫҫĕ.

(*Иллепе милитсионер кĕреççĕ*).

XIV.

ИЛЛЕ (*Елекçей патне пырса*). Ăçта хутăр Верука? Кала, некоŤай (*çухинҫен çавăрса илет*). Мĕн хăтланатăр, пантитсем?! Вăрманта пурнакан тискер çынсем пек кăнтăрлах çынна вăрлама пуçларăр. Кала, ҫорт, ăçта хутăр? Ăçта хупрăр?!

ЕЛЕКÇЕЙ (*хăраса*). Пĕлместĕп епĕ, мана мĕн, епĕ лавçă çеç. (*Тиххăн сĕтел айне кĕрсе лараŤ*).

ТРАХВИН. Ех, пĕтерҫĕç, пĕтерҫĕç.

МИЛИТСИОНЕР. Есĕ кил хуçии? Кала, ăçта хутăр? (*Трахвин Елекçей çине пăхаŤ, лешĕ ун çинелле пăхаŤ*).

ИЛЛЕ. Çак майпа тавăрас терĕри çиллĕре?

МИЛИТСИОНЕР. Пĕлетри есĕр: куншăн сире мĕн пулаŤ?

Пÿлĕмре Верук кăшкăраŤ, алăка кĕмсĕртеттерет. «Илле! Кунта епĕ, кунта. Виççĕн тытнă, йамаççĕ». Çав вăхăтрах Верук çÿçне-пуçне сапатнă. Куççулĕсем паларăççĕ. Ҫупса тухса Иллене ыталаса илет. Йĕрет.

 

ЧУВАШСКАЯ КНИЖНАЯ ПАЛАТА ... АССР

XV.

ВЕРУК. Илсе кай тархашшăн кунтан, Илле, илсе кай. Мана ирĕксĕрлеме тытăнҫĕç. Аран çăлăнтăм Айта киле ҫасрах.

ИЛЛЕ (*ăна ыталаса*). Ку ĕç ахаҫ иртмест вĕсене. Çăварĕсене пĕçерĕпĕрха уншăн.

МИЛИТСИОНЕР. Еттӳç ăçта? Ăçта тарса пытаннă.

(*Пӳлĕме кĕрсе кайат*).

XVI.

ÇАМРĂКСЕМ. Вăт сана туй (*кулса тухса тараççĕ*).

ТРАХВИН (*Иллене*). Илле, есĕ мана ан çиллен, епĕ айăплă мар. Килнĕ çынна хăваласа кăлараймастăн, ху та пĕлетĕн.

ИЛЛЕ (*Елекçейе*). Ну, мĕн калăн? Хĕртен кулма шутларăрим? Мĕн кăна хăтланмарăр есĕр?

(*Милитсионер Еттӳça çавăтса тухат*).

XVII.

МИЛИТСИОНЕР. Ун хапхине тикĕтпе варлани çитмен, тата ирĕксĕр вăрласа каймаи? Пĕлетни: куншăн мĕн пулаť?!

ЕТТӲÇ (*пуçне ҫиксе тăраť. Йевкенпе Мархва пӳлĕмрен тухаççĕ, Мархва Верука сахманне параť, Верук тумланаť*).

МАРХВА (*Иллене*). Ан хăра, ҫĕруна ан çунтар. Хĕрне нимĕн те пулман, йахăна та килмест. (*Çав вăхăтра Тиххăн сĕтел айĕнҫен упаленсе тухса Мархвана ҫут çеç тĕртсе ӳкермест*). У... у... шыври! Ӳкеретĕн вĕт, йавăл. (*Тытса ҫараť*). Ăçта таран? Хăçан çын шутне кĕрĕнши есĕ? Ма килтĕн кунта, мĕн шыраса çӳретĕн? (*Тиххăн йĕрет. Кайран сисмен ҫухне тухса тараť*).

ИЛЛЕ (*Елекçейе йунаса*). Сире пуçăра хыçтарăпăрха! (*Верука*). Ăçта кайăпăр?

МИЛИТСИОНЕР (*хут кăларса Еттӳçа*). Ну, кил кунталла.

ЕТТӲÇ (*пырать*). Мана пырап терĕ вăл.

МИЛИТСИОНЕР. Хаҙ кутăнланмаи? Кала тĕрĕссипе. (*Елекçей тухса кайма тытăнать*). Ес ăçта таран тата? Кайаймăн! Ниçта та тарса пытанаймăн!

ТАРАС (*Верук ашшĕ Тарас васкаса пырса кĕрет*). Ман хĕре ăçта хутăр, ăçта хутăр ман хĕре? (*Еттӳçа пырса тытать*). Шăрҙак! Ман хĕр патне çулăхмаи? (*пĕрре çапса йарать*). Навус. Тĕнҙе йурăхсăрĕ!

МИЛИТСИОНЕР (*Тараса*). Тарас, ан тив, апла йурамасть. Сут саккун тăрăх айăплĕ. Хĕрне Илле илсе карĕ, ан хăра. Иллепе карĕç.

ТАРАС (*Еттӳçа*). Тĕнҙе йурăхсăрĕ! Йурăхсăр вĕт есĕ? Пурăнма памастăр. Йавăлсем. (*Милитсионер çырса ларать, Йевкен кĕтесре пуçне усса тăрать*).

МИЛИТСИОНЕР (*Еттӳçа, Елекçейе тата ыт. те*). Айтăр совета, унта калаçса татăлăпăр. (*Еттӳçа*). Тух! Хăвăртрах ут! Мĕн, тĕве пек, ҙух сулланса пыратăн.

ТАРАС (*Еттӳçа кутĕнтҙен тапать*). Акă сана хĕр, акă сана туй! Акă сана çĕнĕ хăта! (*Тухса кайаççĕ*).

*Ҙ а р ш а в.*

## ТĂВАТТĂМĔШ ПАЙĔ.

Пысăк çурт, икĕ сĕтел. Пĕрин хушшинҙе пуху преçитиумĕ. Хуларан килнĕ рапоҙҙи, йалсовет претçетатгĕлĕ—Ентри, Ҙэвэ, Верук, комсомол çекретгарĕ Миххай, уҙҙитлĕ Павăл Ваççилҙҙĭ. Вăрăм тенкелсем çинҙе халăх ларать, çтена çумĕнҙе те нумайăн тăраççĕ. Илле ура çинҙе, вăл токлатҙĕк Токлата пĕтернĕ, ыйтусем параççĕ.

I.

РАПОҘҘИ. Тепĕр ыйту мĕнле унта?

ИЛЛЕ. Пĕри акă мĕн çинҙен ыйтса пĕлесшĕн (*кулать*). Кун ыйтăвĕ пит кулăшла вара. Итлĕр, акă мĕн çырнă

вăл: „Колхосра кашнин хăйне арăм пулати, йе арăмсем пĕрле пулаççĕи, çавна тĕппипе ăнлантарса пар“. (*Халăх кулаĕ*). Кăна „тĕппипех“ йепле ăнлантарса парас. Паллах ĕнтĕ, ку кулакпа пуп сăмахĕ. Çыракан çавсенђен илтнĕ ăна. Йалга çав сăмахсене каласа çӳрекенсем пурах. Ăнланакансем вăл сăмахран кулаççĕ, хăшĕ-пĕрин, пуринђен ытла хĕрарăмсен сехри хăпса ӳкет. Револђутси хыççăн çавăн пек сăмахсем пит нумай сарăлнăђђĕ.

ТЕПĔР ХРЕСЂЕН. Кĕмелли тӳлев укçийĕ мĕншĕн пуриншĕн те пĕр пек мар?

ИЛЛЕ. Кĕмелли тӳлеве хаљ пурлăх тăрăх илеççĕ. Çĕнĕ устав тăрăх ун шуђĕ 20—10 пулмалла. Патраксенђен пилĕк тенкĕрен ытла илмелле мар. Пуринђен те пĕр илме май килмест, мĕншĕн тесен пурин те пурлăхĕ пĕр пек мар. Патрака илсен, унăн лаши те, ĕни те çук. Çавăнпа пурлăх тăрăх илеççĕ. Анђах ăна устава тепĕр хут вуланă ђухне тĕплĕн калăпăр.

ПĔР ХРЕСЂЕН. Ертелĕн комунăран мĕнле уйрăм пур?

ИЛЛЕ. Комунăра пĕтĕм пурлăха пĕрлештереççĕ, пĕрле ĕçлеççĕ, пурăнаççĕ, пĕрле апат çийеççĕ. Комунăра уйрăм пурлăх пулмасть. Ертелте ĕç выљăхĕсене, çĕре, килçурта пĕрлештереççĕ, пĕрле ĕçлеççĕ Хăшпĕр пурлăх, сăмахран: апат-çимĕç, выљăхсем, ђăх-ђĕпсем, сыснасем, сурăхсем, ытти вак-тĕвек выљăхсем уйрăм пулма пултараймаççĕ.

ПĔРИ. Ĕçлеменнисемпе мĕн тумалла?

ИЛЛЕ. Çыннăн хырăмĕ тутă пулсан, вăл ђирлĕ мар пулсассăн, вăл ĕçлемесĕр пурăнма пултараймасть. Уçнă колхоссенђе вăл ку илтĕнмест. Пурте ĕçлеме тăрăшаççĕ.

ПĔРИ (*ларнă çĕртенех*). Ђленсене колхосра пайук мĕн ђул параççĕ? Çур кĕрепенкепе йепле пурăнмалла. Выçă вилеç унпала.

ИЛЛЕ. Колхосра çур кĕрепенке çăкăрпа выçă усраççĕ тени тĕрĕс мар, Выçăхма мар, нађар пурăнма мар,

пĕрлешсе ĕçлесе тутă, илемлĕ пурăнма тăватпăр епĕр колхос, йулташсем!..

РАПОЂЂИ. Тата урăх ыйтусем пури? Кам мĕн çинђен ăнланман?

ХАЛĂХ. Çук урăх, çук. Вăхăт нумайа тăсăлђĕ, çитет.

РАПОЂЂИ. Токлат пирки кам сăмах калас тет.

ВЕРУК. Манăн пĕр-икĕ сăмах каламалли пурђђĕ.

РАПОЂЂИ. Кала. Ыттисем хатĕрленĕр.

ВЕРУК. Йалта колхос уçас пирки хăшĕ-пĕри темĕскер те пĕр калаçаççĕ пулсан та, хĕрарăмсем хăйсен пуххинђе колхос уçас ĕçе пулăшма сăмах пађĕç. Ĕнер пирĕн телекаткăсен пухăвĕ пулса иртрĕ, унта пухăннă хĕрарăмсем нумайăшĕ колхоса кĕрес терĕç. (*Алă çупаççĕ*). Лишшентсăсен арăмĕсем хирĕç пыма хăтланђĕç те, хĕрарăмсем—телекаткăсем вĕсене пухуран хăваласа кăларђĕç. (*Алă çупаççĕ*). Ђухăнпа вăтам хĕрарăмсем колхоса хирĕç мар, колхос ĕçне пулăшма хатĕр.

ПĔР ХРЕСЂЕН. Епĕ каласшăнђђĕ пĕр-икĕ сăмах.

РАПОЂЂИ. Кала. Кунта тухса кала.

ХРЕСЂЕН. Ăна кунтан та калăпăрçке. Епĕ çавна çеç каласшăн: колхос уçмасан, епĕр хамăр пурнăçа йусама пултараймастпăр. Акă епĕ хамах илем. Хĕрĕх çул ытла нушаланатăп, тем пек тăрăшатăп, анђах...

КУЛАКСЕМ МАЙЛИ. Анђах кăмака çинђе выртма йурататăн, çавăнпа çĕтĕк йĕмпе çӳретĕн! Кахал есĕ!

ХРЕСЂЕН (*çилленсе кăшкăрать*). Çук, тĕрĕс мар вăл, тĕрĕс мар. Пустуйа калаçатăн есĕ, Павăл, мана кураймасăр калаçатăн. Кăмака çинђе выртма вăхăт çук мана. Тĕрĕс, есĕ манран пуйантарах пурăнан, анђах мĕнпе уйрăн есĕ? Кам пуйтарђĕ сана? Тимахви, сан арăмун шăлнĕ пуйтарђĕ сана, ăна аван пĕлетпĕр.

КУЛАКСЕМ МАЙЛИ. Йепле урса карĕ вăл.

РАПОЂЂИ. Сăмах калама ан ђăрмантар.

ХРЕСЂЕН. Пурте пӗлеççӗ, пӗлтӗр манӑн лаша ӳкрӗ, алӑсӑр тӑрса йултӑм. Епӗ те ыттисенђен (*кӑшкӑракан йенне çаврӑнса*), Павӑл, санран та кайа ӗçлеместӗп.

ХАЛӐХ. Пӗлетпӗр, найан çын мар вӑл, Павӑл çилӗпе калаť ӑна!..

ХРЕСЂЕН. Пӗр канмасӑр, çӗр çывӑрмасӑр ӗçлетӗп, анђах пӗр ђухӑнланса йулнӑ та, пӗђђен нийепле те ура çине тӑма çук. Çитӑрӑв кулак мӗншӗн пуйан? Пиртен ытла ӗçлети вӑл, йе кайа ӗçлети? Ӗçлесе курни вӑл ман пек, ђухӑнсем пек? Çук. Çын тарӗпе, çын вӑйӗпе çеç пуйнӑ вӑл. Кам ӗçлемен ун патӗнђе? Кама йӗркеллӗн укçа тӳленӗ вӑл? Вӑт, есӗ çапах каласатӑн кирлӗ мара. Кулаксен аллинђен тухас тесен пирӗн, ђухӑнсен, вӑтамсен, пурин те пӗрлешес пулаť, колхоса çырӑнас пулаť. Пӗрлешсе ӗçлесе пӑхас. (*«Тӗрӗс калан» тенӗ сасӑсем илтӗнеççӗ*). Çапла пӗрлешсе ӗçлесен аван пулӗ тетӗп. Совет влаçӗ пире йӗркеллӗ пурӑнма вӗрентесшӗн, ӑна епӗ аван ӑнланса çитрӗм.

ХАЛӐХ. Тӗрӗс калан, Йахвин, тӗрӗс сӑмах.

РАПОЂЂИ. Тата камӑн мӗн каламалли пур?

КУЛАК МАЙЛӐ ÇЫН. Мана сӑмах парӑр. Епӗ калас тетӗп.

РАПОЂЂИ. Пошалстӑ. Кала.

КУЛАК МАЙЛӐ ÇЫН. Кунта Илле «колхосра пыл та çу пулаť» тесе савӑнтараť пире.

ИЛЛЕ (*кулкаласа*). Тӗлӗк куртӑни есӗ?

КУЛАК МАЙЛИ. Ун шуђӗпе колхосра пурнӑç райри пек пулаť.

ХАЛӐХ. Татах ахӑрашма тытӑнаť ӗнтӗ вӑл, пӗркунхи пек. Ђарас пулаť ӑна. Çитӑрӑв хушса йанӑ ӑна, çав вӗрентнӗ.

РАПОЂЂИ. Калас сӑмахне калатӑр. Ну, малалла мӗскер?

КУЛАК МАЙЛИ. «Ну» ҫав. Колхос уҫӑпӑр. Йурӗ. Ҫапла пултӑр. Пай укҫи тӳлемелле унта. Манӑн, сӑмахран, икҫӗр тенкӗ тӳлемелле.

ПӖРИ (*ларнӑ ҫӗртен*). Ытларах тӳле еппин.

КУЛАК МАЙЛИ. Епӗ, калӑпӑр, икҫӗр тенкӗ тӳлетӗп. Мӗтри патраканӑн мӗн пур пурлӑхӗ те 15 тенкӗ ҫеҫ тӑрать. Ӑна та, мана та колхоса илеҫҫӗ.

ПӖРИ. Ан кӗр еппин. Сана кам ђӗнет.

КУЛАК МАЙЛИ. Йал кӗрсен ман пӗђђен тӑрса йуласим.

ТЕПРИ. Апла калаҫсан йулӑн ҫав.

КУЛАК МАЙЛИ. Ҫапла ӗнтӗ епӗр Мӗтрипе пӗрле пурнатпӑр. Йурать. Ӑна та. мана та пӗр пек пайук параҫҫӗ! Тӗрӗси ҫав йапала? Йепле пек? Ӑҫта вӑл тӗрӗслӗх. Апла тума йурамасть.

ТЕПРИ. Сана миҫе пайук кирлӗ вара, миҫе хырӑм санӑн? (*Пуртэ кулаҫҫӗ*).

КУЛАК МАЙЛИ (*аллине сулса*). Е-е-й, сире каласа ҫӗнтерейменӗн. Есӗр вӗт пӗр кӗтӳ. (*Вырӑнне кайса ларать*)

РАПОЂЂИ (*Иллене*). Сан каламалли пури йулашкинђен?

ИЛЛЕ. Вӑхӑт иртерсе тӑрас мар тетӗп. Каламалли урӑх ҫук манӑн.

РАПОЂЂИ. Хаљ пирӗн ҫӗнӗ устава тӗплӗн вуласа тухас пулать. Кун пирки сӑмах Миххай илет.

МИХХАЙ. Хаљ ҫеҫ килнӗ ҫӗнӗ устава ђленсенђен хӑшӗ пӗри кирлӗ таран ӑнланайманха, ҫавӑнпа кунтах епӗр ӑна тепӗр хут вуласа парасшӑн.

ПӖРИ. Пит вӑрӑм мари?

МИХХАЙ. Ытлашши вӑрӑмах мар та, пит кӗске те мар. Йепле пулсан та пирӗн ун ҫинђен калаҫса татӑлас пулать. Вӑхӑт иртересси тесе тӑма ҫук, устав ыйтӑвӗ пӗђӗк ыйту мар вӑл.

ХАЛӐХ. Тавай, вуласа пар (*Миххай вулама пуҫлать*).

II.

Çав вăхăтра ђӳређерен кĕрĕслеттерсе пăшал пereççĕ. Ђӳређе кантăкĕ ванаť. Миххай—комсомол çекреттарĕ йăванса анаť.

ХАЛĂХ (*хăшĕ сиксе тăнă, хăшĕ алăк патнелле ђу-паççĕ*). Кам кăна? Кам тиврĕ?

МИХХАЙ. Ай! (*аллине тытаť*). Алă ыратаť. Ох, ай (*Верук тата ыттисем йăтса тăратаççĕ*).

ИЛЛЕ, ЉАВА (*халăха ђараççĕ*). Ан тĕпĕртетĕр. Ан хăрăр! Ларăр вырăнта.

ИЛЛЕ. Тухса хăвалас пулаť, кам вăл. Тытас пулаť ăна.

Васкаса тухса кайаççĕ, ун хыçĕнђен 6—7 çын тухса ђупаççĕ. Сасăсем: «Ăв пĕри çырма тăрăх анкартинелле ђупаť, çавă вăл, çавă тем каласан та».

III.

РАПОЂЂИ. Куратри: мĕн хăтланаççĕ кулаксем? Çав-сен ĕçĕ ку, никамăн та м р!

РАПОЂЂИ. Миххайа шăммине тивмени?

МИХХАЙ. Çĕмĕрнĕ, шăмма çĕмĕрнĕ. Алă ыратаť ђăтма çук. Ах!

ИЛЛЕ (*кĕске пăшал йăтса кĕрет*). Акă пăшалне ӳкерсе хăварнă. Хăйне тупаймарăм. Çырма тăрăх тарнă теççĕ. Çĕр тĕттĕм, анкартисене, улăмсем айне шырас пулаť.

ХАЛĂХ. Хăвалас хыçĕнђен. Тупатпăр, ниçта та тарса пытанаймĕç. Нийепле те хăтăлалас çук пирĕн алăран. (*Васкаса тухаççĕ*).

*Ђаршав.*

## ПИЛЛĔКĔМĔШ ПАЙĔ.

Хир. Ыраш вырнă вăхăт. Стсенă çинђе—виç-тăват çĕмел лартнă. Инçетре вăрман курăнаť. Стсенă хыçĕнђе тырă выракан машшинсен сасси. Вăл сасă пĕр çывхараť, пĕр инçете кайаť. Ђаршав уçăлиђђенех шатăртатаççĕ вĕсем. Çынсем кăшкăрашни, ахăлтатса кулни илтĕнет. Хĕртсе хĕвел пăхаť. Стсенă хыçĕнђе ђаршав уçас ђухне хĕрарăм

сасси: «Пыратăри есĕр пайан апат çиме, йе апатсăрах ĕçлесшĕн пайан Миçе хут ђĕнмелле сире!». Ытти сасăсем: «Пĕтермесĕр таврăнмастпăр! Пĕтерес, нумай йулмарĕ». Хĕрарăм сасси: «Ђас пырăр еппин. Апат сивĕнет». Хĕрарăм стсенà урлă кайаť.

I.

ХĔРАРĂМ. Темĕскер пулнă пек, пĕринђен пĕри ăмăртмалла ĕçлеççĕ. (*Аллине сулса*). Хырăмăр выççан пырăрха хăвăрах. Темиçе хут ђĕнсе çӳреместĕп. Ĕç хăçан пĕтет вăл? (*Васкаса тухса кайаť*).

II.

Верукпа пĕр ват çын çул тăрăх калаçса килеççĕ. Верукăн аллинђе утийалпа ђĕркенĕ, нумай пулмасť çуратнă ађи.

ВАТÇЫН. Кĕтрĕм, кĕтрĕм, пырса çаврăнĕçи тесе, çук ĕçе тухиђђен пыраймарĕç. Аптăранипе вара хам килсе кайас терĕм. Пит курас килђĕ. Лђава ман кĕрӳ пулаť вăл. Ман хĕре илнĕ. Улђкаç ман хĕр вăл. Аван пурнаççи? (*Аллине, хĕвел хĕртсе пăхнăран, çамки çине хурса стсенă хыçнелле, машшинсен сасси илтĕнекен çĕрелле пăхаť*).

ВЕРУК (*ăна итлемесĕр аллинђи ађине*). А-а-а-вă аçу машшин çинђе ларса пыраť. Пăх лерелле! Куçусем пур та пăхма пĕлместĕн, курмаççĕха куçусем (*култарасшăн пуçне пăркалаť*). Йепле выртаť вăл (*утийалне пушатаť*). Ăшă пулђĕим? (*Ђуптăваť*). Тарларăним? (*Çĕмел кĕлти çине ађине вырттарасшăн та алли пушă мар, ăна ВАТÇЫН пулăшаť*).

ВАТÇЫН. Ђимха, хам меллĕрех туса парам. Ытла çамрăким ађу?

ВЕРУК. Икĕ уйăх та çитменха. (*Ађине*). Вырт çакăнта, ан тапалан.

ВАТÇЫН (*татах аллине çамки çине хурса пăхаť*).

Ҫава пури ҫавӑнта? Тупаймарӑмҫке. Куҫ наҫартарах манӑн. Ватӑлтӑм, куҫ вӑйӗ пӗтрӗ.

ВЕРУК. Ех, есӗ те ҫав, хӑв кӗрӳпе хӗрне паллаймастӑн. (*Кулкаласа*). Курманни миҫе ҫул вара?

ВАТҪЫН. Миҫе ҫул мар, хӗлле пырсаҫҫӗҫ вӗсем. Инҫетрен паллама ҫук. Хӗвелӗ те куҫа йӑмӑхтарать.

ВЕРУК (*аллипе кӑтартать*). Авӑ леш вӗҫӗнҫе, тепӗр машшин ҫинҫе Ҫава ларса пырать. А-а-а-вӑ, инҫетре. Пӑх вӑн, кӗтесрен ҫаврӑнать. Ҫавӑ вӑл. Паллаӑни?

ВАТҪЫН. Ҫавӑиха вӑл? Тем парсан та паллас ҫук. Машшинӗ ма ҫав тери пысӑк?

ВЕРУК. Ес, асатте, кӑмака ҫинҫе кӑна выртса иртте-ретӗн пулӗ вӑхӑтна?

ВАТҪЫН. Каккуй кӑмака ҫи кунта, ҫӑтма ҫук шӑрӑх (*карттусне хывать*). Мӗншӗн апла калатӑнха?

ВЕРУК. Ҫав машшина пӗлместӗн. Вӑл вырать те кӗлтен хурса пырать. Куран—кӗлтесене йепле ыватса пырать. Тепӗр машшин ҫинҫе ман упӑшка, Илле. Пӗлетӗни? Урккаҫ суллахай йенҫе кӗлте ҫыхса пырать, шурӑ кӗпепе, шурӑ тутӑрпа.

ВАТҪЫН (*пуҫӗнҫи тарне шӑлса*). Шур тутӑрлисем нумай унта. (*Пӑхать*). Кӑткӑ пек ҫын кунта. Йепле хӗвӗшеҫҫӗ.

ВЕРУК. Пӗри кӗлте ҫыххи туса тӑрать вӗтха? Куратни?

ВАТҪЫН. Куратӑп. Тӗсмӗртетӗп.

ВЕРУК. Ун умӗнҫен пӗри, хӗрлӗ тутӑрпа, кӗлте йатса карӗ.

ВАТҪЫН. Куртӑм, куртӑм, палларӑм. Кайамха еппин ҫавӑнта. Тыр выракан машшин халҫҫен курманҫҫӗ.

ВЕРУК. Кӑнтӑрлана апат ҫиме ҫаранмалла ӗнтӗ. Пӗр сехет ҫитнӗ. Кунтан кайаҫҫӗ вӗсем. Килӗҫ.

ВАТҪЫН. Ҫӗр ҫӗмӗреҫҫӗ машшинсемпе (*пуҫне сулкаласа кайать*).

III.

ВЕРУК (*атҫине култарасшăн*). Ан кăлар, ан тăскала аллусене. Ирха тапаланма! Йепле тапаланаť вăл. Хĕвел ăшшине сисрĕним? (*Машшин сассисем ҫарăнаççĕ. Стена хыçĕнҫе пĕрин сасси: «Уҫкка-а-аç, пăхха кам килет! Аçу килнĕ сирĕн пата хăнана. Авă пыраť. Çамрăксен сасси: «Лашасене шыва кĕртме кайатпăр. Шыва кĕме! Шыва-а-а кĕме!!!» Арçын сасси: «Шыв ĕçтернĕ ан пултăр лашăрсене. Лайăх астăвăр!». «Астăватпăр, ăна пĕлетпĕр!» тесе кăшкăраççĕ çамрăксем*).

ВЕРУК (*атҫине аллине илсе*). Авă аçу ҫупса килет. Пăх кунталла, мĕн пуçна пăркалан.

IV.

ИЛЛЕ (*ҫупса кĕрет, çаннисене тавăрнă, питҫĕ-куçĕ тусанланнă*). Мĕншĕн халех тухрăнха есĕ? Сăмаха итлеместĕн. Тухтăр мĕн каларĕ?

ВЕРУК. Вăл каланине пăхса тăрсан.

ИЛЛЕ. Вĕрĕлсен асту! Ҫирлесен, ĕç вăхăтĕнҫе пăхакана та пулмĕ. (*Атҫине*). Ку тата йепле ҫĕлхине çавăркалас выртаť. (*Ҫуптăваť*). Хир курма килтĕним?

ВЕРУК. Питна-куçна çу малтан, хăвăнтан хура тар йухаť. Аҫана варалан!

ИЛЛЕ (*кулкаласа*). Ĕç çынни тусанран хăрамасť вăл. Тусана тасатма пулаť ăна. (*Атҫине*). Çаплаи? Мĕн пуçна пăркалан. Иш йепле пăхса выртаť!

ВЕРУК (*ун аллинтҫен атҫине илет*). Пайан хĕвершшăл виççе пăхрĕ.

ИЛЛЕ (*кулкаласа*). Миçе пăт туртрĕ. Ха-ха-ха!

ВЕРУК. Ан кулха есĕ. Шуť тумастăп епĕ. Пилĕк кило ытлашшипе туртаť. Пилĕк кило та 120 крам туртаť.

ИЛЛЕ. Охо-о-о! Пăхаттыр пулаť. Есĕ ху наҫарланса карăн. Мĕншĕн тухрăрха есĕр?

ВЕРУК. Пӳртре ĕççĕр ларас килмест, Илле. Çынсем ĕçлеççĕ, шавлаççĕ, ахăлтатса кулаççĕ. Машшинăсем шавлаççĕ. Таçта илтĕнет ав вĕсен сасси. Ђӳређерен пăхатăп та, килсе курмасăр ђĕре ђăтмасť. Хаљ манăн нимĕн те ыратмасť ĕнтĕ. Отпăск пĕтиђђен йепле ђăтас. Тата ерне ытла вĕтха!

ИЛЛЕ. Вăт калаçрĕ. Ађа çуратнă хыççăн пит сыхланма хушаççĕ. Есĕ хĕрарăм пулса та çавна пĕлместĕн. (*Кулкаласа*). Хăв курăсра вĕреннĕ. Çĕнĕрен ђирлесен пĕтерен вара хăна та, (*атђине кăтартса*) çак çăмхана та, мана та пит нађар пулаť. Тутисене йепле пĕркелет. Çийесшĕн пулĕ вăл, Верук.

ВЕРУК. Есĕ мĕн пĕлетĕн. Хаљ çеç çитертĕм. Хвершăл тăвата сехетсĕр пама хушмарĕ. Сехет тăрăх çитерме хушаť.

ИЛЛЕ. Вăл ĕçе пĕлсех пĕтерейместĕп вара. Тырă вырма пултаратăп. Пайан икĕ машшинпа кăнтăрлађђен 7 кектар тустарса ывăтрăмăр. Йепле пек, е? Пултаратпàри? Ђасрах ӳс, сана трактăрис тăватпăр. Ун ђухне хир тулли трактăр пулаť. Ну, епĕ шыва кĕме кайасшăнђђĕ. Шăрăх пит (*тарне шăлать*). Çамрăксем çавăнта карĕç пулас.

## V.

Хĕрсем, кађђăсем шавласа ђупса кĕреççĕ. «Верук килнĕ!!! Верук килнĕ!!! Кăтартха ађуна, ађуна кăтарт» тесе кăшкăрса вĕсен йĕри тавра çаврăнаççĕ.

ИЛЛЕ. Ан хĕвĕшĕрха, мурсем. Ађа ађах ĕнтĕ вăл.

ПЛАКИ (*атђине алла илет. Ыттисем пĕр-пĕринпеле калаçаççĕ. Хăшпĕр катђђă çĕмелтен кĕлте илсе хĕвел ăшшине тăсăлса выртаççĕ*).

ПĔРИ. Хĕвел ăшшинђе выртма аванçке (*кĕпине хывать*). Ех, астăвăрха кунне, çав тери аван кун. (*Пĕр пĕринпе тĕрткелешеççĕ, ахăлтатса кулаççĕ*).

ПЛАКИ (*атъгна пăхса*). Пăхăрха, атсемĕр, куçĕсем Иллен пек, сăмси Верукăн пек, ыттисем хăйĕнни пек. Ха-ха-ха, х-о-хо-хо-хо! (*Пурте ахăлтатса кулаççĕ*).

ИЛЛЕ. Ах, йолкки-палкки, куçăхтарса пĕтерĕр есĕр ман ађана. Марш кунтан! Апат çиме. Хирти ĕçе пĕтерсен Октăприна тăватпăр. Çавăн ђухне йатне те пĕлĕр вара. Çаплаи, Верук?

ВЕРУК. Йурĕ, унта çитерха.

ИЛЛЕ. Тĕрĕс сăмах.

ВЕРУК (*кĕлте çинтђе выртакан атъасене*). Есĕр мĕн кунта çарамасланса выртнă. Тата йĕмĕрсене çеç хывма çитнĕ. Темĕн те хăтланăр есĕр.

ПĔРИ. Хывсан та йуран, труççĕксем пур пирĕн. (*Çав вăхăтра Плаки кăкшăмран пĕр кружкă шыв илет те çарамас выртакан катъђăсене сапат. Пурте ахăлтатса кулаççĕ*). Тата кирли? Ытла шăрăх пулсан тата йарăп, кăкшăмĕпех.

ТЕПРИ. Ан хăтлан, Плаки, ан хăтлан тархасшăн. (*Тухса тараççĕ, вĕсен хыçĕнтђен ытти çамрăксем те кулса тъупаççĕ*).

VI.

ИЛЛЕ. Ну, кай есĕ те, епĕ нађђас пырап. Ман хăшне пĕрне нарйат памаллаха, тата шыва кайса кĕмелле.

ВЕРУК. Пĕрлех тавăрнăпăр.

VII.

ТАРАС (*кĕрет, çухине йанă, çара пуçăн. Тусанланнă ыттисем пекех*). КИМ килнĕим? Аха! Вăл та тырă вырма килнĕ (*атъана пырса пăхат*). Тырă вырма килтĕни? Йуран, йуран. Епĕ санăн кукаçу пулатăп. Паллатни? (*Стсенă урлă икшерĕн, виçшерĕн çынсем калаçса кăнтăрлахи апат çиме кайаççĕ*). Çук, палласшăн мар. Куђђенеç илсе памастăп.

ВЕРУК. Пайан ăна çавăркаласа тĕнкине илђеç. Урăх илсе килместĕп ĕнтĕ. Пĕтереççĕ кăтарт тесе, ађа курман пек.

ТАРАС. Уншăн нимĕн те пулмасť вăл. (*Иллене*). Тата икĕ-виç кунтан ыраша вырса пĕтеретпĕр. Çапл аи?

ИЛЛЕ. Кун пек ĕçлесен ик-виç куна пымасť. (*Стсенă урлă иртсе кайакансем хăшĕ-пĕри: «Канма вăхăт, канма» теççĕ. «Илле. Епĕр çитђђас пыратпăр»*).

ТАРАС. Сĕлĕ йешĕлрехха. Кăшт тăмалла пулаť. Ну вăрă-ă-ăм вара. Шветски текенни пит аван ўсет. Йури виçсе пăхрăм, унтан ахађ хирти сĕлĕпе танлаштарса пăхрăм. Пĕр шит ытла пирĕн сĕлĕ ыттисенђен вăрăмрах. Пуђахĕ те ун ђылай пысăк. Виккă та пит вăйлă ўсет. Вăт машшин мĕн тăваť, Илле?

ИЛЛЕ. Трактăр туйансан мĕн пулĕ? Пурте пекех тăрăшса ĕçлеççĕ, хурлама çук. Пĕр Ахванеç кăна ĕçрен пăрăнасшăн. Ђĕлĕм туртма ларати, тата ытти сăлтав тупаť.

ТАРАС. Найанлăхĕ пур ĕнтĕ унăн. Вĕренĕха. Сĕлĕсем çăра тата. Хăмăш пек!

ИЛЛЕ. Çак вăхăтсенђе епĕ кайса пăхса çўреймерĕм. Кăçал тырă вăйлă пулаť. Тырă пĕрђисем те шултăра. (*Ыраш пуђахне илсе алли çинђе йăвалаť*). Куратни? Тасатса аксан мĕнле пулаť!

ТАРАС. Пирĕн хирте кун пек тырă вăйлă пулманни нумай пулаť.

ИЛЛЕ. Та-а, пĕр кектартан 23 ђентнĕр тухнине епĕ те астумастăп.

ТАРАС. Колхосра капла пулассине епĕ малтан шансах каймастăмђĕ, хађ ĕнтĕ хам куçăмпа хам куртăм. Хађ вилсен те йураť ĕнтĕ.

ИЛЛЕ. Вилме йуратиха. Мĕн калаçан. Вată мар вĕтха есĕ?

ТАРАС. Çулёсем пур ёнтĕ, çитмелле. Ђава патне арăмин ашшĕ килнĕ. Интереснăй старик.

ИЛЛЕ. Çавă пулђёимха вăл?

ТАРАС. Машшинсене хыпаласа пăхаť. Çурлипе ђут çеç аллине кастарађђĕ.

## VIII.

АХВАНЕÇ (*найанăн уткаласа пырса кĕрет*). Ывăнтарђĕ пайан.

ТАРАС. Ытла ђас ывăнан вара есĕ, Ахванеç. Кĕлте çыхма та хĕн пулђĕи? Пĕђђен, çурлапа нушаланнă ђухне аванђђĕим?

АХВАНЕÇ (*çĕмел çумне тайăнса*). Ун ђух та аван марђĕ, халĕ те, пурпĕрех ĕçлемелле!

ИЛЛЕ. Ђăнах та вара есĕ, Ахванеç, пит ӳркенсе ĕçлетĕн. Пĕркун хушнă ĕçе тумарăн. Ђирли есĕ?

ТАРАС. Найан ђирĕ пуснă ăна. Ха-ха-ха!

АХВАНЕÇ. Пĕрмаи ĕçлесен еп уйрăм та пурăнма пултаратăп.

ИЛЛЕ. Сана кам ђарса тăраť.

АХВАНЕÇ. Кăçаллăха пурăнса пăхамха, унтан мĕн пулĕ.

ИЛЛЕ. Халех тухса кайма пултаратăн. Ĕçлеме йывăр тетĕн вĕт. Çăмăл ĕç тупăн мушĕт. (*Ахванеç йерипен кайаť*). Çавăн пеккисем колхос йатне йараççĕ те. Нумаи пулмасť ĕçсе ӳсĕрĕлнĕ.

ТАРАС. Çирĕпрех тыткалас пулаť ăна. Ађашласа тăма йурамасť.

## IX.

КЛАВЙЕ (*пырса кĕрет*). Кинӳ килнĕ терĕç те, кĕрсе пăхас терĕм. Сывалатни? (*Ађине*). Ку тата, шак ла пуç. Тапаланаť пулĕ?

ВЕРУК. Апата аван çийет.

КЛАВЙЕ. Апат çисен ўсет вара вăл. Хăвăн сывлăху мĕнле?

ВЕРУК. Епĕ ђирлĕ мариç. Кайа йулнăçке есĕ?

КЛАВЙЕ. Пĕр партти çисе тăранђђăрха. Ёлкĕрĕпĕр. Епĕр кайран ларса çийетпĕр. Атту тăвăртарах. Ёнер йаçлĕна кайса пăхрăм. Ађасем хăйăр çинђе выљаса çўреççĕ. Пăхса ытарма çук. Пĕри те амăшне асăнмаççĕ. Вăт ес, ну, кайрăмăр еппин!

ИЛЛЕ. Есĕр йерипен кайăр, епĕр сире çитĕпĕр. Ман Љавапа калаçмалли пур.

КЛАВЙЕ (*Верука*). Айта еппин, йерипен утар епĕр.

ВЕРУК. Нумай ан тăрăр. Ђасрах (*иккĕш калаçса тухса кайаççĕ. Љава тата ватçын калаçса пырса кĕреççĕ.*)

## X.

ВАТÇЫН (*пуçне суллакаласа*). Тĕлĕнмелле, тĕлĕнмелле. Пирĕн йалта та к лхос тăвасшăнђђĕ те, тăваймарĕç. Ватсем йахăн та килмеççĕ. Ăçта-а-а унта. Епĕ те ђăтаймарăм, епĕ те кăшкăрашма пуçларăм. Çĕнĕ йапала. Хăратаť вăл.

ЉАВА. Ун пеккисем пирĕн те пулђĕç. Епĕ сана, ыттисенђен уйрăмрах пĕлекентерех тесе шутлатăп та, çук есĕ те çавах иккен (*Љава патне пырса хăлхинђен шăппăн темĕскер калаť. Иккĕш калаçаççĕ*).

ТАРАС (*ватçын патне пырса*). Епĕр ватсем çапла вĕт, ĕлĕкхи йăлана хăнăхнă та, «ĕлĕк çаплах пурăннă, пире капла та йураť» тетпĕр те, ăçта аванне сисместпĕр. Çĕнĕлле пурнас пулаť, йулташ, çĕнĕлле.

ВАТÇЫН. Сана хаљ калама аван. Анђах пире хăратса пĕтерђĕç малтан. Выçă усраççĕ, çăкăр çур кĕрепенкĕ çеç параççĕ, тарçă вырăнĕнђе пурăнтараççĕ теççĕ. Такама шанмалла.

ТАРАС (*ахăлтатса кулаť*). Ха-ха-ха! «Тарçă вырăнĕнђе-е-е». Пирĕн кунта тарçă çук. Ёлĕкхи пек çыншăн, шампа хырăмсемшĕн ĕçлеместпĕр, хамăршăн, ертелшĕн ĕçлетпĕр. Çавна ăнланас пулаť. Ну, кайарха епĕр апат çиме.

ВАТÇЫН. Хаљ хам куртăм ĕнтĕ, куçăмпа куртăм, кайсан каласа паратăп ĕнтĕ. Тĕлĕнмелле.

ТАРАС. Ну, уттарар епĕр йерипе. (*Сасартăк*). Ђимха, пастуй, кама çавăтса килеççĕ унта (*стсена хыçнелле пăхаť. Кăшкăраť*). Ваççана тупнă, Ваççана тытнă!!! Вă-ă-ă-н, çавăтса килеççĕ. Ах, шељмă!

ИЛЛЕ. Ăçта? (*пăхкалаť*). Аха, çакланђĕ. Ниçта та кайаймăн (*кăшкăраť*). Хăвăртрах илсе килĕр.

ЉАВА. Епĕ каларăм вĕт, ниçта та тараймасť тесе. Çухинђен çавăтса килемха (*тухса кайаť*).

XI.

ТАРАС (*Илле патне пырса*). Пит хытă кăна хĕртес пулаť ăна куншăн, никотнăйа. Йĕме антарса пăшăхлас пулаť (*Илле шухăшласа тăраť*).

ВАТÇЫН. Мĕн тунă апла вăл! (*Вассана Љавапа тепĕр çын çавăтса кĕреççĕ*).

XII.

КАВРУÇ (*тытнă аллине вĕçерсе*). Утă купи ăшне кĕрсе выртнă.

ТАРАС. Ăçта таркăн пек тарса çӳрен?

ИЛЛЕ. Ну, мĕн калăн ĕнтĕ? Кам вĕрентрĕ сана капла хăтланма? Кама сийен турăн?

ЉАВА. Ђĕлхӳ татăлса ӳкрĕим? Мĕн, усал вăкăр пек, куçна çавăркаласа тăратăн?!

ВАССА. Мана никам та вĕрентмест, нимĕн тума та. Ман хамăн пуç пур. Мĕн тăрăнтăр мана. Мĕн кирлĕ сире?

ТАРАС (*аллине тăратса пырат*). Ех, намăссăр, кĕççе пит (*питҍĕ çине сурат*). Ťфу-у! Тавлашса тăраť тата, сысна. Мĕншĕн пăсрăн тырă выракан машшина? (*Çухинҍен тытат*). Çавăнпа пирĕн ертеле йăлăнса кĕтни? Сысна. Тăм пуç.

ВАССА. Арлан пек сиккелесе ан тăр кунта. Сан ĕç çук.

ТАРАС. Ťфу! Шыври шуйттан, ваттăм çитнĕ, кăтартнă пулăттăм та сана.

ЉАВА. Мĕн шухăшпа кĕтĕн есĕ пирĕн ертеле?

ВАССА. Мана хăратас тетри? Хăратаймăр. Никам та вĕрентмен мана. Хам турăм ку ĕçе. Сирĕн патăрта т а р ç ă вырăнĕнҍе пурăнмастăп.

ИЛЛЕ. А-а-а, вăн мĕн калаçаť вăл. Санăн ĕлĕкхи пек тарçă тытса, хăйаккăн выртса çын ĕнси çинҍе пурнас шухăши? Вĕреннĕ есĕ çын вăйĕпе пурăнма. Вăн мĕн май тупнă вĕсем. Сурăх тирĕ тăхăнса пире улталамаи? Хупса хур, Кавруç, кĕлете. Ыран района ăсатăпăр. Вăхăт, хаклă вăхăта иртерсе тăрас мар унпала. Марш кунтан! Куçран çухал.

КАВРУÇ (*ăна çавăтат*). Ут, айта, ут, сысна. Тараймăн халĕ, тараймăн. (*Тухса кайаççĕ. Тараспа ватçын та вĕсен хыçĕнтҍен пуçĕсене сулласа тухса кайаççĕ*).

## XIII.

ЉАВА. Куратни, мĕн калаçаť? Кĕрешме ҍарăнасшăн мар. Тĕрлĕ май шыраççĕ.

ИЛЛЕ. Та-а-! Сыхă тăрас пулаť. Машшинсене авантарах астăвас пулаť. Мĕн ҍул сийен кŭҍĕ, йавăл. Каларăм вĕт ун пеккисене илес мар тесе.

ЉАВА. Ăçтан пĕлетĕн малганах. Илес терĕç вĕт. Хăй те пит йăлăнҍĕ. Ăса кĕртĕçха сутра. Авă Павăл Ваççилҍҍă та килсе çитрĕ. (*Павăл Ваççилтҍтҍă шкул атҍисемпе, пионерсемпе пырса кĕрет. Атҍасем пĕр-пĕринпе выҍаççĕ*).

## XIV.

ПАВĂЛ ВАÇÇИЛӐӐĂ. Ĕçлетпĕри? Ĕçсем мĕнле пыраççĕ. (*Аӑасене*). Есĕр кайăр, епĕ кайран пырăп.

ПĔР АӐА. Епĕр тем ӑул, пĕр лав пухатпăр. Çапла вĕт, йулташсем.

АӐАСЕМ. Çапла. Ха-ха-ха. Нимĕн те хăвармастпăр. (*Ӑупса тухса кайаççĕ*).

## XV.

ПАВĂЛ ВАÇÇИЛӐӐĂ. Ну, ĕçсем мĕнле пыраççĕ Мĕн шухăша кайнă есĕр?

ИЛЛЕ. Ĕçсем аван пыраççĕ, Павăл Ваççилӑӑă. Анӑах. тăшмансем нумай. Пирĕн ĕçе ӑарасшăн.

ПАВĂЛ ВАÇÇИЛӐӐĂ. Илтрĕм, каласа паӑĕç. Хаӑхи вăхăтра ун пеккисем ӑас-ӑасах пулкалаççĕ. Ытти ертелсенӑе те пулкаланă тет. Сыхă тăрас пулат.

ЛӐАВА. Сирĕн ĕçсем мĕнле? Есĕр мĕн ĕçлетĕр?

ПАВĂЛ ВАÇÇИЛӐӐĂ. Ман ĕç çавă ĕнтĕ. Пĕрмай аӑасемпе. Пирĕн хамăрăн ĕç. Пирĕн хамăрăн ертел. Сирĕнпе ăмăрту тăватпăр. Йышăнатри (*кăтартса кулат*). Куратăри, мĕн пухаççĕ аӑасем? Сийен кӳрекен хурткăпшанкăсене пухаççĕ. (*Аӑасене кăшкăрса*). Епĕ те ӑас пырăп. Машшинсене ан тыткалăр, аллусене касăр.

АӐАСЕМ (*сасă*). Çук, Павăл Ваççилӑӑă, епĕр унта пымастпăр.

ЛӐАВА. Есĕ пиртен нумай пуйан, Павăл Ваççилӑӑă.

ПАВĂЛ ВАÇÇИЛӐӐĂ. Пошалăй. Мĕнтен пуйан?

ЛӐАВА (*ахăлтатса кулса*). Аӑаран пуйан есĕ, санăн пĕр кĕтӳ аӑа. (*Пурте кулаççĕ*).

ПАВĂЛ ВАÇÇИЛӐӐĂ. Урăх йенӑен те сиртен наӑар мар епĕр, пит ан калаçăр есĕр. Пирĕн хамăрăн колхос, шкул колхосĕ сирĕннинӑен кайа мар.

ИЛЛЕ. Пӗлетпӗр, пӗлетпӗр, каламасан та.

ПАВӐЛ ВАҪҪИЛЂЂӐ. Тоттӑ. Ађасем нумай вӗсем, анђах шкул тӑвӑр. Кӗркунне шкул лартма, хӑт те мӗн тӑвӑр есӗр, сиртен укҫа уйӑрса илетпӗр. Ӑна халех каласа хурас. Есӗр манса та кайӑр.

ЛЂАВА. Вӑл хӑйӗннех.

ПАВӐЛ ВАҪҪИЛЂЂӐ. Хамӑннех ҫав. Кӑҫал шкул лартмаллӑх кӑна укҫа пулатӑ ытлашши. Ҫпектаккӑљсем лартма та кирлӗ. Ниҫта лартма та ҫук.

ИЛЛЕ. Ун ҫинђен кӗркунне калаҫӑпӑр.

ПАВӐЛ ВАҪҪИЛЂЂӐ. Ҫук, прат, халех сӑмах парӑр мана. Атту, Шупашкара кайса веҫ тустаратӑп. (*Кулаҫҫӗ*).

ИЛЛЕ. Ха-ха-ха. Есӗ калаҫӑн.

ПАВӐЛ ВАҪҪИЛЂЂӐ (*аллинђи кӗнекене вулама тытӑнатӑ*). Ну хӗвелӗ те хӗртетҫке (*ҫухине йаратӑ*).

АЂАСЕМ (*атђасем шавласа ђупса кӗреҫҫӗ*). Акӑ мӗн ђул пухрӑмӑр, акӑ пӑхӑрха, Павӑл Ваҫҫилђђӑ.

XVI.

ПАВӐЛ ВАҪҪИЛЂЂӐ. Йуратӑ. Ларӑр мана ҫывӑхрах. Пӑхарха епе́р вӗсене. Есӗ, Миттӑа, кунтарах лар, сан хӑлху хытӑрах. Так. Ҫапла (*шӑрпӑк коропкине пӗр атђа паратӑ*). Астӑвӑр, туллийех унта. Пӗри таратӑ, таратӑ, тыт, Петтӑа, тыт. (*Пурте шыраҫҫӗ*). Ан тив, кунта та ҫитмелле. Вӗсем коропкӑ ӑшӗнђе пӗр-пӗринпе паллашђӑрха, епӗр унђђен вӗсем тырра мӗн ђул сийен туни ҫинђен вуласа пӗлӗпӗр. Тырӑшӑн питрех те хӑрушши вӑл—саранђђа. Шӑрђӑк манерлӗ вӑл. Анђах шӑрђӑк вӑл сиксе ҫӳрет, ку саранђђа вара кӗтӗвӗпе вӗҫсе ҫӳрет. Ҫумӑр пӗлӗђӗ пек, хӗвеле хупласа илеҫҫӗ вара. Анасем ҫине лараҫҫӗ те, пӗтӗмпех, пӗтӗм хире ҫаратса хӑвараҫҫӗ. Иртнӗ ҫулсенђе Ђӑваш респуплӗкӗнђе те пит пысӑк сийен турӗҫ вӗсем.

ПЁРИ. Епĕ курнă вĕсене. (*Ыттисем те: «Епĕ те курнă, епĕ те»*).

ПАВĂЛ ВАÇÇИЛҌҌĂ. Ну вăт. 1926-мĕш çулта Такестанра. Такестан ăçтаха вăл? Кам пĕлет? Ну?

ПĔРИ. Çĕпĕрте.

ПАВĂЛ ВАÇÇИЛҌҌĂ. Авантарах шухăшла! Унтан вара? (*Аҍасем шухăша кайнă*). Ну, кам пĕлет? Ниушĕли епĕ сире ун çинҍен каламан пĕртте? Каланă епĕ сире.

П Е Ť Ť А. Капкасра.

П А В Ă Л В А Ç Ç И Л Ҍ Ҍ Ă. Тĕрĕс. Вăт çавăнта саранҍҍасенҍен вĕсемпе йеропланпа кĕрешсе 10.000 *ка* çĕр хăтгрнă. Кашни кектартан 15-шер ҍентнĕр тырă тухсан та, мĕн ҍул тырă тухаť? Есĕр ырана шутласа килĕр ăна.

А Ҍ А С Е М. Йурĕ, йурĕ шугласа килĕпĕр.

П А В Ă Л В А Ç Ç И Л Ҍ Ҍ Ă. Ак ку кĕнеке çинҍе мĕн çыраççĕ. (*Вулаť*). «Йалхуçалăхне сийен кӳрекен кайăк-кĕшĕксемпе хурт-кăпшанкăсем пирĕн хирте пит нумай. Вăл тĕлĕшпе Ҍăваш респуплĕкĕ паллă вырăн йышăнса тăраť. Сăмахран, 1928-мĕш çулта акă калҍа хурҍĕсем 7.000 кектар çĕр, йе урăхла каласан 76.000 ҍентнĕр тырă пĕтернĕ». (*Икĕ çамрăк уҍҍитлĕ патне пыраççĕ*).

XVII.

П Ё Р И. Кăсем кунта мĕн хăтланса выртӑççĕ?

П А В Ă Л В А Ç Ç И Л Ҍ Ҍ Ă. Хăтланса мар, ĕç тăватпăр епĕр.

Т Е П Р И. Есĕр ҍăх хăйĕн çунаҍĕ айне ҍĕпписене пуçтарса ларнă пекех килсе ларнă. Ха-ха-ха, хо-хо-хо!

П А В Ă Л В А Ç Ç И Л Ҍ Ҍ Ă. Ну, прат! Кунта ытлашши шавлама йурамасť. Есĕр хăвăр ĕçе ĕçлеме кайăр. Пирĕн хамăрăн ĕç пур. Итлес тесен килсе ларăр та итлĕр. Ҍармастпăр.

П Ĕ Р И. Мĕн çинђен халап. (*Пырса лараççĕ*). Вунă минут итлеме пултаратпăр интереслă пулсан.

П А В Ă Л В А Ç Ç И Л Ђ Ђ Ă. Ку халапа есĕр пĕлмеллех. Йалхуçалăхне, йе, калăпăр, пирĕн колхос хуçалăхне сийен кӳрекен хурт-кăпшанкăсене сирĕн пĕлесех пулат̆.

ТЕПРИ. Вăт тупрĕ. Вĕсемпе аппаланса вăхăта иртерме. Ха-ха-ха-х! Вăт ĕç тупнă. Кĕлте çыхма илсе кайас пулат̆ сире. Ĕççĕр аптăранă есĕр.

П Ĕ Р И. Пурне те пĕлсе пĕтерсен.

ПАВĂЛ ВАÇÇИЛЂЂĂ. Пĕлессӳ килмесен кай еппин!

АЂАСЕМ. Павăл Ваççилђђă, вулаха. Тата мĕн çырнă?

П Ĕ Р И (*кĕлте çине выртат̆*). Ан çиленĕр, Павăл Ваççилђђă. Акă епĕ кĕлте çине меллĕрех выртап та, вуланине итлесе выртăп.

П А В Ă Л В А Ç Ç И Л Ђ Ђ Ă (*вулат̆*). Вăт пĕр çул хушшинђе çав хурт-кăпшанкăсем 76.170 ђентнĕр тыра пĕтернĕ.

П Ĕ Р И (*кĕлте çинђе выртакан çамрăк сиксе тăрса*). Мĕн ђул тырă пĕтернĕ тетĕр есĕр?

Т Е П Р И. 76.170 ђентнĕр тырă.

П Ĕ Р И. Ой-ой-ой! Вăттăк фу-у-нт!

П А В Ă Л В А Ç Ç И Л Ђ Ђ Ă. Вăт, есĕ нимĕн вырăнне те хумастăн, вĕсем пиртен ыйтмасăрах вăрттăн, пĕђĕккĕн-пĕђĕккĕн кăшласах мĕн ђул сийен тăваççĕ.

П Ĕ Р И. Ăçта, мĕнле кĕнеке вăл?

П А В Ă Л В А Ç Ç И Л Ђ Ђ Ă. Ак пăх, хаљ çеç илтĕм. (*Çамрăк вулат̆*). «Осоавиахим йалхуçалăхне сийен кӳрекенсемпе кĕрешнĕ çĕрте».

Ç А М Р Ă К. Вулăрха есĕр малалла.

П А В Ă Л В А Ç Ç И Л Ђ Ђ Ă (*вулат̆*). 1928-мĕш çулхине, тырă вутпуççисем 64.788 ђентнĕр пĕтернĕ. Вăл кăна та мар. Ытти тĕрлĕ ђирсемпе—223.670 ђентнĕр пĕтнĕ. Çапла вара мĕн пурĕ 364.828 ђентнĕр тырă пĕр çулта сайа кайнă.

ПЁРИ (*тĕлĕнсе*). Ой-ой-ой! Ниушилĕ çапла?

ПАВĂЛ ВАÇÇИЛЂЂĂ. Кĕнеке суйеçтермест вăл (*вулат*). Çав тырра укçа çине куçарсан 3.278.652 тенкĕ пулат̆. Виçĕ мĕлйун тенкĕ ытла.

ПЁРИ. Пăххалĕ есĕ, е? Астуха? Вăт тырăн мĕн ђул тăшман иккен! Вулăрах тата малалла.

ТЕПРИ. Ăна пухура вуласа парас пулат̆. (*Стсенă урлă сынсем икшерĕн, виçшерĕн ĕçлеме иртсе кайаççĕ*).

ИРТСЕ КАЙАКАН. Е-й, ĕçлеме! Çитĕ канма!

XVIII.

ÇАМРĂКСЕМ (*тăрса*). Кайатпăр. Ĕçлес пулат̆.

XIX.

ПАВĂЛ ВАÇÇИЛЂЂĂ. Пирĕн хамăрăн та анасем ĕлкĕрнĕ. Сирĕннинђен кайах мар. Машшинсем кăна çук.

(*Миххай кĕрет*)

XX.

МИХХАЙ. Сана шыраса супрăм пайан, Павăл Ваççилђђă. Аван пурнатри?

(*Сулахай аллипе алă тытат*).

ПАВĂЛ ВАÇÇИЛЂЂĂ. Епĕ аван пурнатăп, есĕ мĕнле? Аллу тӳрленеймести?

МИХХАЙ. Куратăр акă. Мĕнле çӳретĕп. Пӳрнесем авăнмаççĕ. Пĕр-икĕ ернерен тӳрленет терĕ тухтăр. Те ан хăратăр тесе, йăпатса çеç калат̆.

ПАВĂЛ ВАÇÇИЛЂЂĂ. Тухтăр суйеçтермес вăл. (*Атђасене*). Есĕр кайăр, епĕ çиђђас пырап.

АЂАСЕМ. Епĕр шыва кĕме кайатпăр. Айтăр шыва кĕме.

ПАВĂЛ ВАÇÇИЛЂЂĂ. Тарăн çĕре ан кайăр. Астăвăр!

АЂАСЕМ. Йурĕ, карăмăр шыва кĕме!.. (*Тухса ђупаççĕ*).

## XIX.

П А В Ă Л В А Ç Ç И Л Ђ Ђ Ă. Шăммине амантнă вăл санне, Миххай, тата шăнăрне те тивнĕ. Çавăнпа ђас тӳрленмест ĕнтĕ вăл. Каплах йулмасан ниђђовођђĕ.

МИХХАЙ. Тухтăр та çапла терĕ. Шăмми аманнă çав.

П А В Ă Л В А Ç Ç И Л Ђ Ђ Ă. Та, клас кĕрешĕвĕ пĕтменха. Хаљ кулаксем тата ытларах урса карĕç. Анђах вĕсен йулашки кунĕсем çитрĕç ĕнтĕ. Путланаççĕ.

М И Х Х А Й. Ес панă кĕнекене вуласа пĕтертĕм. Пит кăмăла карĕ. Çавсемпе кăна куна ирттеретĕп. Вĕсем пулмасан, вăхăта ниçта хума çук, Павăл Ваççилђђă. Ултă уйăхранпа темиçе теçетке кĕнеке вуласа тухрăм. Халĕ те есĕр ăс патăр. Хаљ «Капкăн» çĕнĕ номĕр килнĕ терĕç те, çавăн пирки сана шыратăп. Парса йамăнши? (*Çамрăксем, хĕрсем шавласа кĕреççĕ*).

## XXII.

П Л А К И. А-а-а, кунта иккен вĕсем! Хăвăр «Капкăна» çаклантăр. (*Ахăлтатса кулаççĕ*). Ха-ха-ха. Ха-ха-ха. Çаклантăр пирĕн алла. (*Хăшĕ пĕри Павăл Ваççилтђа икĕ хулĕнтђен çаклатаççĕ*). Айта пирĕнпе кĕлте çыхма, айта, айта, хамăртан хăвармаспăр сире. (*Теприсем Миххайа сывă хулĕнтђен çавăтаççĕ*). Айта есĕ те пирĕнпеле. Ан турткаланăр, пурпĕрех йамастпăр. Çаклантăр.

П А В Ă Л В А Ç Ç И Л Ђ Ђ Ă. Ан турткалашăр. Епĕр хамăр та пыратпăр. (*Стсенă хыçĕнтђе ахăлтатса кулни илтĕнет, машшин сассисем çывăхрах илтĕнеççĕ*).

И Л Л Е П Е Т А Р А С (*кулса тăраççĕ*). Аха, аха! Çапла. Сĕтĕрĕр ĕçлеме!!! Ха-ха!!! Ĕçлеттерес пулаť. Ха-ха-ха!

*В ĕ ç ĕ.*

Цена 45 коп.

С. ЯЛАВИН

# КТО КОГО

ЧУВАШСКОЕ ГОСУДАРСТВЕН. ИЗДАТЕЛЬСТВО
Чебоксары — 1931